ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

3 (4365) №, 2014, кăрлач, 23 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

## Чăвашлах калаçас килет

Виççĕмĕш класри Анна Лалаян – вĕренӳ отличникĕ. Пур предмета та пĕр пек юратаканскер ӳссен тухтăр пуласшăн.



Кукамăшĕпе тата кукашшĕпе пурăнать вăл. Ашшĕне амăшĕ Мускавра ĕçлесе кун кунлаççĕ.

– Анне чăваш манăн, атте – эрмен. Асаттепе асанне патне пĕррехинче хăнана кайса курнăччĕ. Лайăх кĕтсе илчĕç ун чухне. Сĕтел тулли апат-çимĕç хатĕрленĕ пире кĕтсе. Питĕ килĕшрĕ, çапах та чун тăван енех туртăнчĕ. Манăн тăвансем эрменле калаçнă чух пĕр сăмахне те ăнланмарăм. Кирек мĕн каласан та мана чăвашлах пуплеме килĕшет. Пĕлетĕр-и, аттепе аннешĕн çав тери тунсăхлатăп эпĕ. Час-час шăнкăравласа калаçатпăр, скайппа та çыхăну тытатпăр пĕр-пĕринпе. Кашни уйрах килсе çӳреççĕ, кучченеççемпе хавхалантарса хăвараççĕ. Вĕсене савăнтарас тесе вĕренӳре «5» паллăпа кăна ĕлкĕрсе пыма тăрăшатăп, – тет Анна хăпартланса.

Мал ĕмĕтлĕ хĕр ача ташă кружокне хавасланса çӳрет. Тĕрлĕ конкурса хутшăнса пĕрре мар çитĕнӳ тунăскер малашне те хастаррисен йышĕнчех пуласшăн.

– Ан тив, ман çитĕнӳсемшĕн кукаçипе кукамай, аттепе анне тата тус-юлташсем яланах савăнччăр. Арменире пурăнакан асаттепе асаннене хамăн çитĕнӳсем пирки тăтăшах пĕлтеретĕп, – тет хĕр ача шухăша путса. – Хăйсен хĕпĕртевĕ пирки мана çийĕнчех пĕлтереççĕ. Эпĕ вара татах та çунатланса та хăпартланса малалла талпăнатăп.

**Элиза ВАЛАНС.**

Елчĕк районĕ,
Аслă Елчĕк.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

ТĔЛ ПУЛУ

## Олимп факелĕ – Вăрмарта

Вăрмар районĕнчи Энĕшпуç шкулĕн вун пĕрмĕш класĕнче вĕренекен Николай Васильев хăйĕн хĕресне амăшĕпе, Тĕнче ăмăртăвĕсенче çăмăл атлетикăра пĕрре мар çитĕнӳ тунă, хальхи вăхăтра Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Енри Тĕп управленийĕнче вăй хуракан Светлана Захаровăпа чĕререн мăнаçланать.



– Нумай пулмасть вăл пирĕн шкулта хăнара пулчĕ. Шупашкар урамĕпе йăтса чупнă Олимп факелĕпех çитрĕ. Пурте тытса куртăмăр икĕ килона яхăн таякан Олимп факелне. Асăнмалăх сăн ӳкерттерни те хăйне евĕр уяв пулса тăчĕ маншăн. Ара, çитменнине Светлана Владимировна – аттен аппăшĕ. Манăн çавăн пек хастар тăван пурришĕн мăнаçланатăп. Хĕресне анне манран çар çынни тăвасшăн. Хамăн вара, спорта чĕререн юрататăп та, физкультура вĕрентекенĕ пулас килет. Апла-и, капла-и, пурнăç кăтартĕ унта. Тен, чăнах та офицер пулса тăрăп-и? Вара хĕресне анне çав тери савăнĕ. Халĕ умра – хĕрӳ тапхăр. Патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсене çине тăрса хатĕрленетĕп, – тет мал ĕмĕтлĕ Коля.

**Луиза ВАСИЛЬЕВА.**
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

4-мĕш стр.

### Паянхи кăларăмра:

2 стр.  Тухтăр пулма ĕмĕтленекен Настя Александрова

6 стр.  Кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларакан Диана Моисеева

9 стр.  Чăвашра та усракан страус пирки – тĕплĕнрех

Çитес номерте: Геннадий ЭСЕКЕЛĔН «Салтак пурнăçĕ» повеç сыпăкĕсем

# «Унран пахи нимĕн те çук»



Канаш районĕнчи Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Шăхасанти пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкул таçтан аякран курăнса ларать. Пĕтĕмпе тăват çĕр ытла ача вĕренет. Çĕнĕ те хăтлă, тирпейлĕ шкулта ачасем пĕлÿ илнишĕн чунтан хĕпĕртеççĕ, савăнăçа ниçта шăнăçтараймасăр тенĕ пек тантăшĕсемпе ялан «пĕлÿ карапне» ырлаççĕ.

Вуннăмĕшĕнчи Анастасия Александрова вĕренÿре çеç мар, пĕтĕм çĕрте ĕлкĕрсе пыма тăрăшать. Хăйĕн тăрăшулăхĕпе пурне те тыткăна илме пултарнă хĕр малашнехи пурнăç çине тăнăç куçсемпе пăхать, мал ĕмĕтсемпе пурăнать.

«Пултаруллăскере иккĕмĕш класранпах асăрхарăм, – каласа парать чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Галина Семеновна Ефимова. – Унăн калаçăвĕ çыпăçуллă, куçĕсем ăслă та тимлĕн пăхаççĕ. Настя мĕн ачаранпах хăйĕн тăван чĕлхипе калаçма тăрăшатчĕ». Кашни çулах вăл тĕрлĕ предметпа иртекен олимпиадăсене хутшăнса малти вырăнсене йышăнать. Вĕренÿре çитĕнÿсем тунисĕр пуçне юрлама, ташлама кăмăллать. Шкулта йĕркеленĕ мĕн пур мероприяти вара вăл хутшăнмасăр нихăçан та иртмест. Лара-тăра пĕлмен, ÿркенменскерĕн ĕçĕ те ăнса пырать, хăй пултарнă таран тантăшĕсене те пулăшать. Тăван тавралăха, ашшĕ-амăшне, тăванĕсене, юлташĕсене чунтан юратать, пурне те ырă сунса килĕштерсе пурăнма сунать. Уйрăмах вăл чăваш наци радиовĕн передачисене итлеме кăмăллать. Чăваш халăхĕн кун-çулне çутатакан тата историпе çыхăннă кăларăмсене итлеме юратать. Ун пек чухне тарăн шухăша путать. Пĕрре кăна мар радио передачисене хутшăннă хĕр малашне те çыхăнăва татасшăн мар, малалла тăсасшăн, пĕрле пулăсшăн. Настьăн ĕмĕчĕ çав тери пысăк. Шкултан вĕренсе тухсан хăйĕн пуласлăхне тухтăр профессийĕпе çыхăнтарасшăн. «Çынсене сыватни, йывăр вăхăтра вĕсене пулăшнинчен пахи нимĕн те çук ахăртнех», – тет вăл.

## Çеçпĕл Мишши вĕреннĕ класра

Çеçпĕл Мишши вĕреннĕ класс паян та тирпейлĕн упранать. Михаил Кузьмин çак шкулта 1908-1911 çулсенче вĕреннĕ. Ĕлĕкхи шкулта юсав ĕçĕсем пыраççĕ, унта музей пулĕ. Пĕлÿ çÿрчĕн пысăк пайне вара ачасем валли садик туса хута ярĕç. Ĕлĕкхи шкула сыхласа хăварма пултарнăшăн чунтан хĕпĕртет Галина Семеновна. «Иртнисĕр малашлăх çук»,– тенĕ ĕлĕк ваттисем. Апла тăк, хамăрăн пурлăха упрама вĕренес пулать, несĕлсем çамрăк ăрăва парнелесе хăварнă пурлăха куç пек сыхламалла.

***Алексей ТОРГОВЦЕВ.***

**Сăн ÿкерчĕксенче:** Анастасия Александрова; Алевтина Владимирова; футбол команди.



## Спортра та малта

«Пирĕн класс питĕ туслă. Пур ĕçре те хастар эпир. Уйрăмах вĕренÿре малта. Света Степанова, Артем Николаев тата Ксюша Коновалова «пиллĕк» паллăсемпе çеç вĕренеççĕ. Вун пĕр ача вара – ударниксем. Шăнкăрав пире çĕнĕ вĕренÿ çулне йыхăрнăранпа икĕ чĕрĕк иртрĕ. Вĕренме пĕтĕм условисем çителĕклĕ: классем çутă, компьютерсем пур, вĕренÿре кирлĕ хатĕрсем çĕннисем. Чи пахи – вĕрентекенсем ырă. Вĕсем ырă пулни пире тата та тăрăшулăхпа палăрма хистет. Кăçал тумалли ĕçсен планне йышăнтăмăр, чылай ĕç кĕтет пире», – çапла пĕлтереççĕ çиччĕмĕшсем. Çак класран районта тата республикăра иртекен олимпиадăсене хастар хутшăнаççĕ. Вĕсен хушшинче: Аня Яковлева вырăс литературипе 2-мĕш, Артем Николаев информатикăпа 1-мĕш, технологипе – 3-мĕш, Ольга Пуганова чăваш чĕлхипе – виççĕмĕш, Алевтина Владимирова физкультурăпа 2-мĕш вырăнсем йышăннă. Жанна Семенова вара шывра ишессипе районта чемпионка ята тивĕçнĕ. Футбол вăййине кăмăллакансем шутне: Женя Егорова, Никита Григорьева, Ромăпа Толя Васильевсене кĕртмелле. Туслă класăн вĕренекенĕсем пĕрле тĕрлĕрен çул çÿреве тухса çÿреççĕ, кану кунĕсем йĕркелеççĕ, пушă вăхăтра спорт вăййисемпе туслăхсене çирĕплетеççĕ. Республикăра футболла выляссипе çулсерен иртекен ăмăртусенчен хаклă парнесемпе таврăнаççĕ.



## Чуна тивекен кĕвĕ-çемĕ çывăхрах

***Хăш чухне Виктория чÿречерен пăхать те шухăш авăрне путать. Çак самантра хăй ăçта ларнине те манса каять, йĕри-тавра мĕн пулса иртнине те асăрхамасть вара. Çапла пуçа сăвă йĕркисем килме тытăнаççĕ.***



Саккăрмĕш класранпа чуна канăç паман шухăшсене рифмăласа шурă хут çине шăрçалакан пике Сергей Есенин пултарулăхне кăмăллать. Районта тухакан «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçатра та пичетленеççĕ илеме витĕр куракан чăваш хĕрĕн сăввисем. Хайлавĕсем ытларах чухне амăшĕ çинчен.

Пирĕн хушăра çынна усал сунакан нумай пулни Викăна питĕ пăшăрхантарать. Пĕр-пĕринпе ăш пиллĕ пулма мĕн чарать-ши? Шел, чылайăшĕ çакăн пирки шухăшласа пуçне çĕмĕрмест. Виктория Якимова вара: «Çыннăн сăпайлă та таса кăмăллă пулмалла», – тет. Ун çине пăхсанах камран тĕслĕх илмеллине ăнланатăн. «Çак лăпкă та йăваш, çемçе чунлă пике тарăхма та пĕлмест пуль», – тесе шухăшласа илетĕн. «Çук, манăн та кăмăл тĕрлĕрен пулать», – тет Вика пĕр пытармасăр.

Раççей эстрадине çепĕç сассипе тыткăнлакан Максим юррисене килĕштерет вăл, хăй те юрăç пулма ĕмĕтленет. Тунсăхлă, чуна тивекен кĕвĕ-çемĕ ăна çывăхрах. Çавăнпа пике тăтăшах концертсене çÿрет. Нумаях пулмасть Муркашра «Асамлă сасă» конкурс иртнĕ. Унта Вика та юрă шăрантарнă.

Шкул хыççăн Культура институтне вĕренме кĕресшĕн вăл. Викторийăна ĕмĕтне пурнăçа кĕртме ăнăçу сунар!

***Лариса ПЕТРОВА.***

Муркаш районĕ, Юнкă шкулĕ.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13, VII хут.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2328 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 208
Пичете кăрлач уйăхĕн 22-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

(Р) паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Хӳтĕлевçĕсем – амăшĕн савăнăçĕ

**Пурнăçа юратма тата сывлăха çирĕплетме вĕрентекен чи лайăх пулăшуçă – спорт. Бокс ачана пур енлĕн аталантарать. Спортăн çак тĕсĕпе хатĕрленекенсем – вăйлă тата тӳсĕмлĕ, уçă кăмăллă, хăюллă, яваплăха туяççĕ, хăйсене тытма пĕлеççĕ, хăйхальлĕн ĕçлеме тата хăрушлăха лексен хӳтĕленме пултараççĕ.**



Саккăрмĕшĕнче вĕренекен Алексей Кудряшов тăваттăмĕш çул боксна туслă. Сергей Васильевич Черкашин тренер хатĕрленипе унăн ăсталăхĕ ӳссех пырать. Ăмăртусене хутшăннă май тĕрлĕ хулана çитсе курнă вăл: Кстово, Лысково, Çĕнĕ Шупашкар, Шупашкар, Çĕмĕрле тата Çĕрпӳ. Унта çĕнсе илнĕ Хисеп хучĕсем килте типтерлĕн упранаççĕ.

«Кашни çын боксер пулма пултараймасть. Кунта кăмăл çирĕплĕхĕ кирлĕ», – тет Алексей. Тĕнчипе паллă пĕр тăван Кличкосене сăнанă май хăй те вĕсенчен тĕслĕх илет. Пĕчĕккисене кӳрентернине курсан лăпкăн иртме пултараймасть, хӳтĕлеме васкать.

Çамрăк боксер çут çанталăка упрас ĕçре те хас-тар. Çемьепе пĕрле кил таврашĕнче нумай йывăç лартнă. Чĕр чунсене юратакансекер йытăсене уйрăмах кăмăллать, мĕншĕн тесен вĕсем – питĕ ла-йăх юлташсем, кил-сурт сыхлавçисем. Шел, хăш чухне усалрахисем те тĕл пулаççĕ. Тахçан Алешăна та пĕри çыртнă иккен. Халĕ вăл пĕчĕк мар, харсăрланнă, йытăсенчен тек хăрамасть. Шикленмесен çак чĕр чун та хăвалламасть вара.

Нихçан ӳркенмен Алексей килте те ахаль лармасть: урайне тасатать, чашăк-тирĕк çăвать. Хăш чухне мунча та хутать. Икĕ ывăлтан асли пулнă май пур ĕçе те яваплăн пурнăçлама хăнăхнă çав вăл.

Арçын ачан ашшĕ пĕчĕк чухне бокспа хатĕрленме çӳренĕ. Ку туртăм ывăлĕсене те куçнă. Алешăн пиллĕкмĕш класра вĕренекен шăллĕ Сергей та çак спорт тĕсĕпе туслă. Çемьере çавăн пек хӳтĕлевçĕсем пурришĕн амăшĕ, паллах, питĕ савăнать.

***Лариса ПЕТРОВА.***

Муркаш районĕ,
Юнкă шкулĕ.

# Спецназ вĕренӳ ирттерет

**Кăрлачăн 14-мĕшĕнче, хӳтĕленӳ тата спорт ĕçĕсен уйăхлăхĕ умĕн, Чăваш Республикин ятарлă тĕллевсене пурнăçлакан çар чаçĕн çыннисем Çĕньял Покровски шкулĕн «Çамрăк спецназовец» отрячĕпе вĕренӳ ирттерчĕç.**



Çак отряда иртнĕ çулхи чӳк уйă- хĕнче йĕркеленĕ. Вун тăватă сехетре вĕренӳ çурчĕ çывă- хĕнче бронемашина курăнса кайрĕ. Çар çыннисем – спецназ отрячĕн командирĕн çумĕ, шалти ĕçсен подполковникĕ А.И. Андреев, штурм отрячĕн пуçлăхĕ, шалти ĕçсен подполковникĕ А.А. Фролов, спецназăн штурм пайĕн аслă инспекторĕ Д.В. Александров майор, шалти ĕçсен капитанĕ тата водитель-инструктор тивĕçне пурнăçлакан А.В. Архипов, УФСИН пресс-службин пуçлăхĕ тата шалти ĕçсен подполковникĕ С.А. Герасимов. Çар çыннисем вун тăватă сехет те пилĕк минутра вĕренӳ пуçлама хатĕрленӳ ĕç-пуçне ирттерчĕç. Спорт залĕнче пур вĕренекенпе педагог та пуçтарăнчĕ. Кĕске пĕлтерӳпе, службăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă хыççăн шкул ачисем хушшинче ăмăрту пуçланчĕ. Кунта пăшал пухса сӳтессипе, ятарлă тумтире хăвăртрах тăхăнассипе тупăшрĕç, харпăр хăйне хӳтĕлессин хăш-пĕр тĕсне кăтартса пачĕç. Спорт пайĕ вĕçленсен кăмăл пуррисем бронемашинăпа ярăнса курчĕç. Çак тĕл пулу ырă шухăш-туйăм хăварчĕ. «Çамрăк спецназовец» отряд малашне те нумай ăмăртăва хутшăнĕ.

***Евгений ФЕДОТОВ, 10 класс.***

Шупашкар районĕ,
Çĕньял Покровски шкулĕ.

# Йытă таврăнасса ĕнентĕм…

**Етĕрне районĕнчи Мăн Явăш шкулĕнче пултарулă ача сахал мар. Вĕсенчен пĕри – Венера Николаева. Юрраташша ăста вăл, хавхалану килсен сăвă та çырать.**



«Чăваш чĕлхи вĕрентекен Татьяна Михайловна эпĕ çырнисене тӳрлетме пулăшать», – тет Венера. Çеçпĕл Мишшин сăввисене килĕштерет вăл, Александр Пушкинăн «Кичем вăхăтне» уйрăмах кăмăллать. Хĕр ача хăй те çут çанталăка сăнлама ăста, сăввисенче чĕр чунсене тата тăван тавралăха юратма, хӳтĕлеме чĕнет.

«Малтан мана чăвашлисем килĕшетчĕç, халĕ вырăсла итленĕ май Сергей Лазарев тата Алсу юррисем ытларах кăмăла каяççĕ», – чунне уçать хаваслă хĕр ача. Шкулти уявсенче тата ялта ирттерекен Çимĕкре час-часах илемлĕ те çепĕç сассипе савăнтарать вăл.

Хĕресне амăшĕ ăна: «Хитре юрлатăн, санăн театр ĕçне вĕренме каймалла», – тенĕ. Венерăна хăйне те ку шухăш килĕшет. Григорий Федоров артист патне лекесшĕн вăл. Артистăн илемлĕ ташлама та пĕлмелле-çке. Çавăнпах Венера ташă кружокне çӳрет. Унта вăл тухăç ташшине вĕренет. Çăмăл мар, паллах. Анчах тăрăшсан пур йывăрлăха та парăнтараятăн. «Малтанах алăсемпе хускану тума вĕрентĕмĕр, кайран – хырăмпа, – тет маттур хĕр ача. – Çĕнĕ çулхи уявра та пухăннисене савăнтартăм».

Венера физкультура урокне кăмăллать, сывлăхлă пулас тесен кĕлеткене çирĕплетмеллине лайăх ăнланать. Районта çак предметпа иртекен олимпиадăна та хутшăннă. Пурнăçпа савăнса пурăнма пĕлекенскер чечексемшĕн чунне пама хатĕр. Пӳртре вĕсем туллиех, çулла пахчара та илемĕпе куçа йăмăхтарса ларaççĕ.

Тăватă ураллă шанчăклă тусĕ инкеке лексен хĕр ача çав тери хурланнă. Йытта машина çапса кайнă та пĕчĕкскер таçта çухалнă. «Вăл вилнĕ пуль тесе кулянтăм, – аса илет Венера. – Чиркĕве çӳрекен Ира аппа мана лăплантарчĕ. «Турра кĕл тусан вăл пулăшатех», – терĕ. Эпĕ ăна итлерĕм те йытă киле таврăнтăрччĕ тесе йăлăнса ыйтрăм. Каç пулсанах юратнă тусăм алăк умĕнче курăнса кайрĕ». Халĕ черчен чунлă хĕр ача хăйне яланах хӳтлĕхре туять. Çулте пире инкекрен хăтарма пултаракан çăлавçă пуррине чунтан ĕненет вăл, унăн пулăшăвне хăй те туйрĕ-çке.

***Лариса ПЕТРОВА.***

# Тавралăха илем кӳрекенсем

Тăвай районĕнчи Элпуçĕнчи вăтам шкулта волонтерсен юхăмĕ анлă сарăлнă. Уроксем хыççăн тата канмалли кунсенче çамрăк ĕçченсем тавралăха тирпей-илем кĕртме тăрăшаççĕ, ватă çынсене пулăшма та манмаççĕ. Хĕллехи вăхăтра ялсенчи палăксене юртан хырса тасатассине те хăйсен тивĕçĕ тесе шутлаççĕ волонтерсем. 6-7 классенче вĕренекен Настя Борисова, Лена Кириллова, Дима Ашмаев, Настя Моисеева, Маша Гаврилова тата Настя Иванова ĕçченлĕхĕпе, ырă кăмăлĕпе уйрăмах палăрса тăраççĕ. Сăн ӳкерчĕкре шăпах çак маттур ачасене куратпăр та.

***Петр НИКИФОРОВ, вĕрентекен.***



1-мĕш стр.

# Олимп факелĕ – Вăрмарта

## Маттур, Света!




Раççей Федерацийĕн спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Светлана Владимировна Захарова тăван тăрăхне, Вăрмар районне, Олимп факелне илсе каяс тĕллевлине малтанах никама та шарламан. Кайран, чăтайман, хăй ĕмĕтне ĕмĕрĕпех пушар хуралĕнче ĕçленĕ Василий Николаевич Нягина пĕлтернĕ. Отставкăри полковник унăн шухăшне ырланă.

– Маттур, Света, пулас ăрушăн тăрăшатăн. Ку уява пурте пĕрле анлăн паллă тăвăпăр, пĕрле ĕçлекен ĕçтешсем те сана хавхалантарма пыраççех, – тенĕ Василий Николаевич.

Вăрмарсем хăйсен сăмахне çилпе вĕçтермерĕç. Палăртнă кун вĕсем тăван ене хавас кăмăлпа çитрĕç. Аслă Чак, Атайкасси ялĕсенче пулчĕç, халăхпа тĕл пулса Олимп факелне кашниех тытса пăхма пултарчĕ.

– Раштав уйăхĕнче Шупашкарта иртнĕ Олимп çулăмĕн эстафетинче хутшăнма тӳр килнишĕн питех те савăнатăп. Мана, спорта юратакан çынна, çакă хăйне евĕр уяв пекех пулчĕ. Эсир те, ентешсем, яланах спорта юратăр. Унпа туслашсан пурнăç та илемлĕрех, хаваслăрах пулĕ, – терĕ Светлана Владимировна пурне те ырă суннă май.

Çул çӳрев малалла тăсăлчĕ. Олимп факелĕн ушкăнĕ Энĕшпуç ялне васкарĕ. Шкул тĕлне вара вĕсем пушар хуралĕн машинипе çитрĕç. Хăнасем акт залĕнче тĕл пулу иртterчĕç. Шкул ачисемпе вĕрентекенсем тата ял çыннисем вĕсен ăш пиллĕ калаçăвне тимлĕн итлесе ларчĕç. Ун хыççăн Василий Николаевичпа Светлана Владимировна паттăрлăх урокĕ иртterчĕç.

– Кăçал пирĕн шкул 130 çул тултарчĕ. Çак вăхăтра мĕн чухлĕ ача вĕренсе тухса пурнăçăн анлă çулĕ çине тăман-ши? Паллă çынсем нумай тухнă ку пĕлӳ çуртĕнчен. Малашне те Энĕшпуçсем кирек ăçта та палăрасса шанатпăр. Акă Александр Алексеевпа Александр Григорьев йывăрлăха хыçа хăварса МЧС-ăн аслă шкулĕсенче пĕлӳ илеççĕ. Спортпа туслă курсантсене пурте хисеплеççĕ, ыттисем те вĕсенчен тĕслĕх илме тăрăшаççĕ. Çакă пире те хавхалантарать. Ентешсем çитĕнӳ картлашки çине час-час хăпарни шкул чысне те çӳле çĕклемест-и-ха? Çавăнпа та, ачасем, сирĕн те аслисем пекех çĕр-шыва юрăхлă çын пулмалла. Кирек епле йывăрлăха çĕнтерсе малалла талпăнмалла, – терĕ, хăй вăхăтĕнче Энĕшпуç шкул сукмакне такăрлатнă Василий Нягин пурне те хавхалантарса.

## Вун виçĕ пин тенкĕ тăракан çулăма тытса курни



Светлана Захаровăна та тимлĕ итлесе ларчĕç çамрăксем. Ара, унăн сăмахĕсем чуна кĕрсе вырнаçаççĕ-çке.

– Кашни çыннăн пурнăçĕ хăйне евĕр. Вунă ачаллă çемьере çитĕннĕ пирки йывăрлăхне те пĕрре мар чăтнă. Саккăрмĕш класс хыççăн Шупашкарти Олимп резервĕсен училищине çул тытрăм. Пурнăçăм йăлт улшăнчĕ. Килтисемшĕн тунсăхланипе каççерен минтер йĕпениччен макăраттăм. Кашни вырăн ют пулнăран пăрахса тухса кайма шут тытрăм. Ялан кăмăл хуçăк пулнине кура пĕррехинче аппа хăйпе юнашар лартса калаçу пуçарчĕ. Çемçен пуплесе чуна яриех уçрĕ. Хамăн йывăрлăхсене куççуль витĕр каласа патăм. Вăл мана пĕр пӳлмесĕр тимлĕ итлесе ларчĕ. Унтан: «Ах, йăмăкăм, питĕ лайăх ăнланатăп сана. Çапах та ку пурнăçра кама çăмăл? Акă анненех илер. Вăл миçере çывăрма выртса миçере тăнине те курса юлаймастпăр вĕт. Эпир вăраннă çĕре сĕтел çинче унăн тутлă апачĕсем пăсланса лараççĕ. Ялан атте-анне çунатти айĕнче пурăнаймастпăр. Света, кашнинех мал ĕмĕтсемпе хавхаланса пурнăç çулĕ çине тăмалла. Ура çине çирĕппĕн пусса хамăрăн атте-аннене пулăшу кӳмелле. Санăн вара пуçна усмалла мар, çирĕп утăмсемпе сулмаклăн утмалла. Спортра çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ туса çĕнтерӳ картлашки çине хăпармалла. Мĕнех, ăнăçу сана, Света. Кирлĕ мар шухăшусене паянах пуçран кăларса пер", – терĕ ун чухне аппа. Чăн та, çавăн хыççăн чун уçăлчĕ, аппа сăмахĕсем вăй-хăват хушрĕç. «Аттеанне ятне çӳлте тытма сăмах паратăп», – терĕм ун чухне ăна. Вăл вăхăтра аппа ăс паман пулсан паян ăçта пулаттăмччĕ-ши эпĕ? Ак çакăнта сирĕнпе те тĕл пулу иртterейместĕм ахăртнех. Çавăнпа та, ачасем, йывăр вăхăтра çывăх çыннăрсемпе чунăрсене уçса калаçма ан ӳркенĕр, – терĕ Светлана Владимировна хăй пурнăçĕпе паллаштарнă май.

Паллă спортсменка Олимп факелне хăй укçа тӳлесе илнĕ.

– Спортшăн каçса каятăп та, хама валли парне тăвас терĕм. Вун виçĕ пин тӳлесе илтĕм эпĕ ăна. Çакăншăн пĕрре те ӳкĕнместĕп. Акă ăна тытарса кăтартма тăван тăрăха та çитрĕм, – терĕ Светлана Владимировна журналистсен ыйтăвне те туллин хуравласа.

## Хавхалану кӳрекен хăнасем



Çынна яланах ырă тума тăрăшакан тăххăрмĕшĕнчи Женя Сергеев çамрăк пожарнăйсен дружинин ертӳçи. Хăйсем патне хăнасем килессине пĕлсен çав тери хĕпĕртерĕ вăл.

– Олимп факелне алăпа сĕртĕнсе çеç мар, йăтса та куртăм. Икĕ килона яхăн туртакансkere Светлана Владимировнăна Шупашкар урамĕпе йăтса чупма пит çăмăлах пулман ахăртнех. Тĕл пулу вара ĕмĕр асра юлмалла иртрĕ, тавах хăнасене пире хисеп туса килнишĕн. Унччен пушар хуралĕнче вăй хунă ветерансемпе тата паянхи кун та çав тытăмра ĕçлекенсемпе курса калаçма питĕ кăмăллă пулчĕ. Вĕсем пирки манăн хамăн «ĕçтешсем» тесе калас килчĕ. Ара, эпир те, дружина членĕсем, халăха пулăшма сыхă тăратпăр. Виçĕм çул хурăнлăх çуннă чухне те вăхăта сая ямасăр унталла чупрăмăр. Аслисемпе пĕрле кар тăрса вут чĕлхине парăнтарма пултартăмăр, – терĕ хастар яш.

Мĕн ачаран спорта юратакан, халĕ те физкультура урокĕсене чунтан кĕтекен каччă строитель пуласшăн.

– Хăвăртрах шкултан вĕренсе тухса юратнă профессие алла илсе ĕçлеме пуçăнасчĕ. Техникăсăр пурăнаймастăп та, машина туянасчĕ. Хам тар кăларса пухнă укçапа, – палăртрĕ шухăшне Женя.

## Паллă çын пулма ĕмĕтленекен Кристина



Виççĕмĕш класри вĕренӳ отличникĕ Кристина Николаева Светлана Владимировна пек паллă çын пулма ĕмĕтленет.

– Çавăнпа кашни урокра вĕрентекен сăмахне ăша хыватăп. Вулама юратнăран часчас библиотекăна çӳретĕп, килте паллашма кĕнеке илетĕп. Задачăсемпе тĕрлĕ хăнăхтарăвăн тупсăмĕсене тупмасăр вырăнтан та хускалмастăп. Шкулта информатикăна вĕрентекен аннем Ирина Александровна та пăхса-сăнасах тăрать. Вăл мана кирек епле ĕçе те тĕплĕ тума вĕрентнĕ, – тет Кристина хавхаланullăн.

Хĕр ача Володя шăллĕпе çав тери туслă.

– Тăваттăри шăллăм халех сас паллисене паллать. Тепĕр чухне кĕнеке те вулать. Манран тĕслĕх илет ахăртнех. Ларса-тăма пĕлменскер алла ручка тытса ӳкерме ухута. Ман шутпа, унран та паллă çын пулатех. Хăш чухне тĕрлĕ ыйту парса халтан ярать, – тет Кристина пĕр тăванĕ пирки кăмăллăн аса илсе.

Мал ĕмĕтлĕ хĕр ача Светлана Владимировна пек хастар пулса пурнăçра çитĕнӳ тăвасшăн.

– Ун чухне эпĕ те тăван шкула мăнаçлăн утса кĕрĕп те çамрăксемпе асра юлмалли тĕл пулу иртterĕп. Мана тимлĕ итлесе ларакансене ырă сĕнӳ-канаш парса хăварма та манмăп, – терĕ хавасланса тем çинчен те ĕмĕтленме юратакан хĕр ача.

Вăрмар районĕ,
Энĕшпуç.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

Тантăш 5
3 №, 2014, кăрлач 23

# Çĕнĕ ятсем уçрăмăр, çĕнтерӳçĕсене палăртрăмăр

**2013 çул вĕçĕнче Çĕрпӳ районĕнчи шкулсенче вĕренекен çамрăк çыравçăсен «Çавал» ентешлĕхĕ йĕркеленнĕренпе 20 çул çитнине халаллană «Çĕрпӳ енĕн паллă çыннисем» пултарулăх конкурсне ирттертĕмĕр. Шкул ачисене хамăр тăрăхри сумлă, хисеплĕ çынсен ырă та пархатарлă енĕсене курма, вĕсем çинчен тĕплĕнрех пĕлме хавхалантарас, çамрăк çыравçăсен ăсталăхĕпе пултарулăхне ӳстерме пулăшас тĕллев лартрăмăр хамăр ума. Литература ăмăртăвне Кăнар, Чиричкасси, Йĕкĕрвар, Ямаш, Сăнав, Апакасси, Михайловка, Туçи шкулĕсенче 8-11-мĕш класс вĕренекенĕсем тата Çĕрпӳри аграрипе технологи техникумĕнче ăс пухакансем хастар хутшăнчĕç.**

Конкурса тĕрленчĕк, эссе, очерк, очеркла калав, интервью, сăвă ярăмĕ килчĕç. Вĕсен йышĕнче илемлĕх енчен паха хайлав чылай пулчĕ.

Çамрăксем паллă ентешĕсене Ираида Вдовина тата Анна Токсина юрăçсене, Орлов-Шуçăм, Александр Сергеев тата Гурий Алексеев композиторсене, Иван Викторов поэт-патриота, Эдуард Сергеев çар летчикне, Николайпа Нина Григорьевсем тата Елена Шорникова артистсене, Олимпиада Иванова спортсменкăна, Ункăçум ялĕнчи И.П. Петрова, В.И. Иванова, Г.Л. Леонтьева, С.А. Петрова, Кĕлейкасси Туçари мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен учительте ĕçленĕ, «Хисеп Палли» орден илме тивĕçнĕ Ф.И. Юрьева, Йĕкĕрварти А.И. Афанасьева, Туçи енĕн паллă çыннисене: Александр Никитина, Степан Сергеева, Геннадий Андреева, Иван Николаева, Сергей Спиридонова, Опытнăй шкулĕн хисепе тивĕçнĕ вĕрентекенĕсене тата ыттисене ырă та ăшă туйăмпа сăнласа пачĕç.

Конкурс çĕнтерӳçисем 6 номинацире палăрчĕç:

**1. «Кăсăк сюжет» номинацире** Димитрий Никитин, 9 класс, Йĕкĕрвар шкулĕ (вĕрентекенĕ – Валентина Владимировна Афанасьева);

**2. «Асра юлмалли сăнар» номинацире** Алексей Герасимов, 9 класс, Чиричкасси шкулĕ (вĕрентекенĕ – Нина Ивановна Матвеева); Надежда Гордеева, 10 класс, Кăнар шкулĕ (вĕрентекенĕ – Рина Рудольфовна Трофимова);

**3. «Наци колоричĕ» номинацир**е Андрей Васильев, 9 класс, Кăнар шкулĕ (вĕрентекенĕ – Рина Рудольфовна Трофимова); Ольга Алексеева, 8 класс, Ямаш шкулĕ (вĕрентекенĕ – Ираида Николаевна Филимонова);

**4. «Хăйне евĕрлĕ стиль» номинацире** Василий Иванов, 9 класс, Опытнăй шкулĕ (вĕрентекенĕ – Татьяна Николаевна Петрова); Елена Михайлова, 2 курс, аграрипе технологи техникумĕ (вĕрентекенĕ – Геннадий Лукьянович Никифоров); Татьяна Семенова, 9 класс, Апакасси шкулĕ (вĕрентекенĕ – Елена Александровна Павлова); Марина Васильева, 11 класс, Кăнар шкулĕ (вĕрентекенĕ– Рина Рудольфовна Трофимова);

**5. «Кăмăл-туйăм» номинацире** Виктория Павлова, 8 класс, Апакасси шкулĕ (вĕрентекенĕ – Елена Александровна Павлова); Анастасия Адемасова, 10 класс, Туçи шкулĕ (вĕрентекенĕ – Ираида Николаевна Христофорова); Павел Егоров, 8 класс, Опыттнăй шкулĕ (вĕрентекенĕ – Татьяна Николаевна Петрова); Алексей Павлов, 11 класс, Опытнăй шкулĕ (вĕрентекенĕ – Людмила Ананьевна Павлова);

**6. «Пысăк пахалăхлă шай» номинацире** Анастасия Федорова, 8 класс, Михайловка шкулĕ (вĕрентекенĕ – Ирина Николаевна Федорова).

Жюри членĕсем Çĕрпӳ районĕнче çуралнă çыравçăсем Николай Ишентей (Тури Шурçырма), Микулай Мăскал (Чечейкасси Туçа), Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ Г.Л. Никифоров (Хурамал Туçа) тата Социализмла Ĕç Геройĕ Г.И. Афанасьева (Паваркасси), вăлах ачасем валли хаклă парнесене туянма укçа парса пулăшаканĕ (спонсорĕ) пулчĕç. Вĕсем пултарулăх ăмăртăвне хутшăннă ачасем шыравлă та тĕпчевлĕ ĕçлеме пултарнине тата хăйсен хайлавĕсенче чăн пулăмсене тĕпе хурса тăван ялта, таврара тата çĕр-шывра лайăхпа палăрнă, хисепе тивĕçнĕ çынсен чун хавалне, ырă енĕсене, хастарлăхĕсене уçса пама пултарнине палăртрĕç.

***Геронтий НИКИФОРОВ,***
***Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ.***

ЧУНРИ

# Унра – тĕслĕх

*Тăван ялăм, савнă ял,*
*Эп çуралнă Йĕкĕрварăм!*
*Ĕмĕр манмăп эп сана,*
*Эсĕ те ан ман мана!*
***(Надя Никифорова, 8 класс).***

Ку сăмахсене хамăр шкулти Надя Никифорова сăввинчен илтĕм. Вăл хăйĕн юратнă ялне мухтать, ун илемĕ çинчен калать. Маншăн та чи хитри çуралнă ен. «Мĕншĕн-ха маншăн та çывăх? – тейĕр эсир. Кăна ăнлантарас тесен кăшт хам çинчен калам. Эпĕ Шупашкар районĕнчи пĕр ялта çуралса ӳснĕ, 7 çула çитиччен унтах пурăннă. Мана, пиччене тата висĕ çулти шăллăма Шупашкарти ача çуртне ячĕç. Унта эпир висĕ çул пурăнтăмăр. Тĕрлĕ çемьере пулса куртăмăр çав тапхăрта. 2008 çулхи çулла шăпа пире Çĕрпӳ районĕнчи Йĕкĕрвара илсе çитерчĕ. Ялти шкулта вĕрентекен Валентина Владимировна Афанасьева пире çуллахи каникул вăхăтĕнче хăй патне илчĕ. Кунта икĕ уйăх пурăннă хыççăн эпир ача çуртне урăх каяс темерĕмĕр, çак çемьерех юлма кăмăл пуррине палăртрăмăр. Çапла çуралчĕ пирĕн чĕре хушнипе йĕркеленнĕ çемье. Йĕкĕрвар вара маншăн та тăван пулса тăчĕ. Тăван яла юратасси атте-аннене, хăв пурăнакан киле юратнинчен пуçланать. Маншăн халĕ атте-анне вырăнĕнче Афанасьевсем: Александр Ильичпа Валентина Владимировна. Вĕсен çемйи – манăн çемье, вĕсен килĕ – манăн кил. Паян вара эпĕ кил хуçи Саша пичче çинчен каласа парасшăн.

1962 çулта çуралнăскер, вăл Йĕкĕрвар шкулĕнчен вĕренсе тухса Çĕрпӳри ял хуçалăх тухникумне кĕнĕ. Пĕрремĕш курс хыççăн ăна çара илсе кайнă. Унтан таврăнсан Шупашкара çул тытнă, ял хуçалăх институтне кĕнĕ. Хăйĕн студент чухнехи пурнăçĕ çинчен пире нумай каласа парать. Институтри олимпиадăсенче час-часах малти вырăнсене тухнă иккен, наукăпа практика конференцийĕсене те хутшăннă. Уйрăмах ăна институтра спорт ĕçне мĕнле йĕркелени килĕшнĕ. Футбол вăййине кăмăлланă, пушă вăхăтне футбол лапамĕнче ирттернĕ, тĕрлĕ ăмăртура институт чысне хӳтĕленĕ. Пĕррехинче çемьепе Шупашкар хулине кайрăмăр. Ял хуçалăх академийĕ умĕнче антăмăр. «Акă вăл Шупашкарти чи лайăх вĕренӳ заведенийĕ, эпĕ çакăнта пĕлӳ илнĕ. Республикăри чи пысăк, чи курăмлă институтсенчен пĕри», – паллаштарчĕ пире çав илемлĕ те пысăк çуртпа.

1987 çулта Саша пичче алла диплом илнĕ. Ăна Мари Республикинчи пĕр хуçалăха ĕçлеме янă. Анчах та амăшне пĕччен пурăнма йывăррине пула тăван яла таврăннă, кӳршĕри «Цивильский» совхозра инженер ĕçне кӳлĕннĕ. Çулталăкран хамăр ялти вăйлă аталаннă «Динамо» хуçалăха чĕнсе илнĕ. Кунта чăх-чĕп фабрикинчи инженер, хăрушсăрлăх техникин инженерĕ, машинăпа трактор паркĕн инженерĕ пулса тăватă çул ĕçленĕ. Унтан ăна тĕп инженер тивĕçне шанса панă. Çав ĕçре Саша пичче вун тăватă çул вăй хунă. Администраци ун ĕçне пысăка хурса хакланă. Тăватă хутчен ăна «Районти чи лайăх тĕп инженер» ят панă, Хисеп грамотисемпе чысланă. Машинăпа трактор паркĕн ĕçне йĕркелесе пынă хушăрах спорта та манман. Йĕкĕрварти «Динамо» футбол ушкăнĕпе пĕрле республикăри аслă лигăра выляна. Çитĕнĕвĕсемшĕн панă Хисеп хучĕсемпе медальсем унăн темĕн чухлех. Наградăсене тишкернĕ май эпĕ пушар сӳнтерекенсенчен чи лайăххисене çеç паракан Грамота та куртăм. Вĕсене «Динамо» хуçалăхшăн район ăмăртăвĕсенче тивĕçнĕ иккен.



Шел, совхозсене ура çинче çирĕп тăма йывăр тапхăрта «Динамо» хуçалăх арканнă. Ăна упраса хăварас тесе тем пек тăрăшсан та май килмен. «Тăванран та тăван пулса тăнă машина-тракторсене, комбайнсене, мĕн пур техникăна сутма питĕ шелччĕ ĕнтĕ, ман пурнăçăн пĕр пайĕ пулнă-çке вăл», – аса илет Саша пичче. Кун хыççăн та ахаль ларас темен, платник ĕçне алла илнĕ. Халĕ те Саша пиччен бригади тунă пӳртсем, мунчасем яла илем кӳрсе ларăççĕ. Çапла, икĕ çул, хăй шӳтлесе каланă пек «Пӳрт тăрринчи Карлсон» пулса çӳренĕ хыççăн ăна В.Г. Григорьев йĕркеленĕ «Регион» коммуналлă хуçалăх организацине тĕп инженера ĕçлеме чĕнсе илнĕ. Унта вăл улттăмĕш çул вăй хурать. Хула çыннисен çуртĕнче ăшă пултăр, сивĕ тата вĕри шыв вăхăтра çиттĕр тесе ырми-канми тăрăшать. Хăй ĕçне тĕрĕс те тӳрĕ кăмăлтан туса пынăшăн организаци учредителĕсем те, хула администрацийĕ те Александр Ильича Хисеп грамотисем парса чысланă.

Саша пиччене ял çыннисем те хисеплеççĕ. Вăл кирек кампа та шăкăл-шăкăл, ăшă кăмăлпа калаçать, нихăçан та сассине хăпартмасть. Тĕрлĕ техникăпа пĕр-пĕр ыйту сиксе тухать-и е çĕр сухаласа курăк акмалла-и – пурне те ырă канашсем парать.

Килте вара Саша пичче пирĕншĕн тăван атте вырăнĕнчех. Кунта пурăнма килсенех эпир унран: «Атте тесе чĕнме юрать-и сана?» – тесе ыйтрăмăр. «Юрасса юрать, анчах та, ачасем, сирĕн хăвăрăн тăван аçу пур-çке, вăл мана та, сире те çилленĕ», – тесе хуравларĕ. Халĕ эпир вăл тĕрĕсех каланине ăнланатпăр, мĕншĕн тесен эпир хамăрăн тăван аттепе хутшăнатпăр, вăл пирĕн пата киле-киле каять. Саша пиччепе те вĕсем лайăх хутшăнура. Саша пичче вара пирĕншĕн чăн-чăн, ытарайми пичче! Тĕрлĕ ĕçе хăнăхтарать, çынпа мĕнле калаçса мĕнле хутшăнмаллине вĕрентет. Эпир унпа пĕрле хамăрăн киле тирпейлетпĕр: стенасене илемлетрĕмĕр, тул енчен сайдингпа сăртăмăр, лупас айне те çĕнетрĕмĕр. «Маттур ĕçлетĕр», – тесе хавхалантарать. Эпир, Никитинсем, Саша пиччен ывăлĕсемпе те туслă пурăнатпăр. Унăн Вова тата Илья тăван ывăлĕсем ашшĕ пекех ĕçчен те тирпейлĕ çынсем. Хальхи компьютер технологийĕсем аталаннă вăхăтра вĕсем иккĕшĕ те çав енĕпе пĕлӳ илме ăнтăлнă. Вова И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче компьютерпа дизайн технологийĕсен факультетĕнче пĕлӳ илнĕ. Салтакран килнĕ хыççăн Шупашкарти пĕр фирмăна ĕçе вырнаçрĕ. Илья вара Мускаври электрон техникисен институтĕнче вĕренет. Вăл çар техники валли çĕнĕ детальсем ăсталас енĕпе тĕпчев ĕçĕсем тăвакан институтра ĕçлет. Вĕсем те ашшĕне питĕ юратаççĕ, шкулта вĕреннĕ чухне пулăшнăшăн тав тăваççĕ. Манăн пичче Денис та Вовăпа Илья çулĕпе каяс терĕ, вăл Шупашкарти электромеханика техникумĕнче информатика енĕпе вĕренет. Эпĕ вара ял хуçалăх академине вĕренме кĕресшĕн. Тен, мана çакăн пек йышăну тума ял çыннисем часчасах: «Ăçтан пулма пĕлнĕ эсĕ, чăн-чăн Ильич пекех, сăнупа та, кĕлеткӳпе те», – тени те хавхалантарать пуль. Ильич – ку Саша пиччен ялти ячĕ. Ăна Саша тесе мар, хисеплесе Ильич тесе чĕнеççĕ. Саша пичче те мана: «Дима, эсĕ вара шăп ман пекех, япаласене ăçта тытнă, çавăнтах пăрахса хăваратăн, ман ачах пуль эс», – тет хăйне те, мана та шӳтлĕн асăрхаттарса. Тен, çапла калани хавхалантарать-ши – ун çулĕпе кайса ял хуçалăх академине вĕренме каясах тетĕп. Сăмах май, Саша пичче нихăçан та хурланса, ĕç ăнмарĕ-ха ман тесе кулянса лармасть. Паян мар тăк, ыран пулатех тесе хавхаланма пĕлет. Эпир вăл шӳтлеме юратнине те хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Ялти çынсем те çавнах калаççĕ. «Ильич пур пулсан кулма хатĕрленсе çăварсене карсах хумала», – теççĕ.

Александр Ильич диплом илнĕренпе 25 çул çитнине паллă турĕ. Вĕсем пĕрле вĕреннĕ студентсемпе тĕл пулчĕç. Унтан таврăнсан пире Саша пичче нумай сăн ӳкерчĕк кăтартрĕ, хăйĕн студент чухнехи тусĕсем çинчен каласа пачĕ. Вĕсем хушшинче ял хуçалăх предприятийĕсен директорĕсем те, инженер пулса ĕçлекенсем те, фермерсем те пур иккен. «Академире пĕлӳ илнĕ çын нихăçан та ĕççĕр лармасть», – вĕрентет пире Саша пичче. Çавăнпах вăл И.Я. Яковлев, чăвашсен Аслă педагогĕ каланă сăмахсене те асра тытма хушать: «Килĕшсе ĕçленĕ ĕç пысăк усăллă – çакна пĕлсе тăрăр, ун пек ĕçе юратăр. Чăн пĕчĕккĕ ĕçе те пит пикенсе, юратса ĕçлĕр. Пурнăçра курма тивнĕ йывăрлăхшăн ан кулянăр. Юратса тусан чи пĕчĕккĕ ĕçе те чаплăлантарса яма, усă паракан тума пулать; ӳркенсе ытахальтен анчах ĕçлесен чăн пысăк ĕç те пăрахăçа тухать, хисепрен каять», – тенĕ иккен аслă патриархăмăр. Эпĕ çакна асра тытма тăрăшатăп...

Час-часах пирĕн Афанасьевсен-Никитинсен пысăк çемйи пĕрле пухăнать. Ун пек хаваслă кунсенче Саша пичче пире хăй рецепчĕпе хатĕрленĕ шашлăкпа сăйлать. Эпĕ вара шухăшлатăп та ăмсанатăп – манăн та çакăн пек туслă çемье çавăрасчĕ, Саша пичче пек чăн-чăн çемье пуçĕ тата ăста специалист пуласчĕ.

***Димитрий НИКИТИН,***
***9 класс.***

Çĕрпӳ районĕ,
Йĕкĕрвар шкулĕ.

# Тĕл пулу



ÇАМРĂК ПОЭТ

## Сăвă ятарласа çуралмасть

***Шкул сакки çине ларнă-ларманах Диана Моисеевăн чунĕнче сăвă çырас туртăм вăраннă. Ăнсăртран мар пуль. Пиччĕшĕн Артемăн сăввисем тăтăшах «Тантăш» тата «Çĕрпӳ хыпарçи» хаçатсенче пичетленнĕ, хĕр ачан та тăванĕнчен юлас килмен. Пиччĕшĕ йăмăкне шухăша уçăмлăрах çырма вĕрентнĕ тата тĕрлĕ сĕнӳпе пулăшнă.***



Пурăна киле хĕр ачан сăвă çырас ăсталăхĕ хăйĕнпе пĕрлех ӳссе пынă. Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Вера Алексеевна Егоровăн тата Ирина Витальевна Аристарховăн урокĕсем те витĕм кӳнех ĕнтĕ. Тăваттăмĕш класра чухне «Тантăшра» пĕрремĕш хут «Кукамипе кукаçи» тата «Анне» сăввисем пичетленсен пултаруллă хĕр ача тата хавхалануллăн ĕçлеме тытăннă.

«Улми йывăççинчен аякка ӳкмест», – теççĕ халăхра. Дианăн амăшĕ, Эльвира Федоровна, шкулта физика предметне вĕрентет. Апла пулин те çамрăк чухне вăл сăвă çырма ăста пулнă. Çак пултарулăх енĕ каярах ачисене те куçнă.

Диана ытларах çемье тата çут çанталăк темисене хускатать. «Сăвă йĕркисем ятарласа çырас тенĕ чухне пуçа килмеççĕ, мĕн те пулин пулса иртсен, каçхине, çывăрас умĕн лайăх çырăнаççĕ», – тет çамрăк сăвăç.

Паянхи куна çитиччен вăл тĕрлĕрен конкурсра çĕнтерсе нумай Хисеп хутне тивĕçнĕ, икĕ хулăн портфолиона курсан хĕр ачан маттурлăхĕнчен такам та тĕлĕнĕ. Хăйĕн пĕрремĕш çитĕнĕвне хастар шкул ачи питĕ лайăх ас тăвать. Наукăпа практика конференцийĕнче «Автор прозипе поэзийĕ» секцире хăйĕн сăввисемпе паллаштарнă, иккĕмĕш вырăн йышăннă. Пĕлтĕр вара Диана çамрăк çыравçăсен «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» литература конкурсне хутшăннă, унăн сăввисем çак проект кĕнекине кĕме тивĕçнĕ. Шкул, район тата республика çеç мар, Пĕтĕм Раççей шайĕнче те хастарлăхне кăтартма пултарнă-çке вăл. «Талантсен çăлтăрлăхĕ» раççей конкурсĕнче виççĕмĕш вырăн йышăнни мĕн тери пысăк çитĕнӳ!

«Пĕлтĕр пиччепе сăвă кĕнеки кăлартăмăр. Вăл «Чунăмри йĕркесем» ятлă. Унта хамăрăн чи лайăх хайлавсене кĕртрĕмĕр», – каласа парать Диана. Çакăн хыççăн пултаруллă пике вырăсла сăввисене пухса тепĕр кĕнеке кăларнă, «Мысли в стихах» ятлă вăл. Ку хыпаршăн пĕтĕм шкул савăннă, ăна халалласа уяв та йĕркеленĕ. Унта ачасем курма пуçтарăннисене маттур тантăшĕн сăввисемпе паллаштарнă. «Диана «Анне» ятлă сăввине вулама тытăнсан куççуле чараймарăм, чуна пырса тивекен йĕркесене итленĕ май вăл хăех шăпăртатса анчĕ», – терĕ Эльвира Федоровна çав уяв саманчĕсене аса илнĕ май. Чăнах та, çак йĕркесем мĕн тери чуна пырса тивеççĕ:

«Эс кулсассăн чĕрем савăнать,
Хĕвел пек ăшăтать чунăма.
Хурлансассăн ман чун ыратать,
Сирсе ярăттăм сан хуйхуна...»

Кĕнеке кăларас ĕç, паллах, çăмăл мар. Укçа-тенкĕ те чылай кирлĕ. Ку енчен хĕр ачана юратнă кукамăшĕпе кукашшĕ пулăшнă. Вĕсемех ăна сăвă çырма та хавхалантараççĕ. «Тăрăшсан çитĕнӳ пулатех», – теççĕ мăнукне час-часах. Ырă чун-чĕреллĕ хĕр ача юратнă çыннисем патне тăтăшах çӳрет, кил тавраршĕн чи мĕн пур ĕçе тума пулăшать, ватăсене чылай çăмăллăх кӳрет. Аслисем ĕлĕкхи йывăр пурнăç пирки каласа панине хĕр ача тимлĕ итлет те паянхи ăна питĕ çăмăл пек туйăнса каять. «Шел, çакна хаклама пĕлместпĕр эпир», – тет вăл. Кукашшĕпе кукамăшĕ иккĕшĕ те инвалид, çавăнпа Диана вĕсем пирки пĕр самант та манмасть.

Пултаруллă пике чăвашла кăна мар, вырăсла та çырать. Куншăн вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Людмила Геннадьевна Петровăна тав тăвать. Икĕ çул хушши наукăпа практика конференцийĕнче пĕрремĕш вырăн çĕнсе илнĕ вăл. Çак предмет олимпиадисене те хаваспах хутшăнать.

Пĕр паллă кинофильмри евĕртерех калас пулсан: «Хастар шкул ачи, сăвăç, спортсмен тата чăн-чăн чиперук!» – теме пулать ăна. Çак сăмахсене физкультура вĕрентекенĕ Борис Андрианович Ананьев та çирĕплетрĕ. Диана спортпа туслă. Вăл выляакан команда кăçал районта баскетболпа пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Часах маттурсем республика шайĕнчи ăмăртăва та хутшăнĕç. «Спорт çирĕп сывлăхлă пулма ĕмĕтленекен кашни çыннах кирлĕ», – тет Диана.

Театр кружокне хастар çӳрекенскер спектакльте хăйне шанса панă роле чĕререн вылять, сăнара куракансем ĕненмелле калăплать. Хăйĕн ушкăнĕпе район конкурсне хутшăнса çĕнтерӳçĕ пулса тăнă, республика шайне тухса Хисеп хутне тивĕçнĕ. Икĕ çул хушши ăна районта «Пике рольне чи лайăх калăплакан» ятпа чысланă.

Диана ташăра та маттур. Хăйĕн ăсталăхне кĕçĕн классене вĕрентет. Вăл хатĕрленĕ ушкăн район конкурсĕнче «Ылтăн ура» номинацире çĕнтернĕ.

«Манăн сылтăм алă вăл, пĕр мероприяти те унсăр иртмест. Амăшĕ ăна епле çуратма пĕлнĕ-ши? – тет Л.Г. Петрова вĕрентекен. – Районти ытти шкулсенче вĕренекенсем пĕр-пĕр ăмăртура Дианăна курсанах вăл çĕнтерессе пĕлсе тăраççĕ, унран иртме пултарасси çинчен ĕмĕтленмеççĕ те».

Диана – питĕ лайăх ертӳçĕ. Вăл кирек хăш самантра та çухалса каймасть, çавăнпа уявсенче сăмах калама ыйтсан яланах халăх умне тухса илемлĕ те уçăмлă калаçма пултарать. Пысăк тĕл пулусенче те ăна сăмах пмараççĕ. Ялта «Урожай» стадион уçăлсан Диана пĕр хатĕрленмесĕрех Республика Пуçлăхĕ умĕнче тав сăмахĕ каланă. Символла уçăна та çак маттур хĕр ачана тыттарнă.

Çĕрпӳ районĕн «Ылтăн ертӳçи» тата «Ылтăн стипендиачĕ» вăл. Унăн çитĕнĕвĕсене каласа çитерес çук. Медаль те, Хисеп хучĕ те чылаях, анчах Диана вĕсемпе нихăçан та мухтанмасть, мăн кăмăлланса çӳремест. Вăл яланах сăпайлă, çынна ăнланма тата пулăшма хатĕр. Этем мĕнлерех пулнине куçран пăхсах пĕлме пулать теççĕ. Эпĕ те çакна Дианăн ырă та ăшă куçĕсенченех ăнлантăм.



Çитĕнĕвĕсемшĕн Диана ашшĕпе-амăшне тав тăвать. «Вĕсем пирĕншĕн питĕ тăрăшаççĕ, мĕн кирлипе тивĕçтереççĕ, ялан ăслă сĕнӳ-канаш параççĕ», – тет вăл.

## «Ылтăн ача»

«Эпĕ куçаруçă пулма ĕмĕтленетĕп», – терĕ çиччĕмĕш класри Владимир Григорьев пуласлăх пирки шухăшланă май. Çавăнпах акăлчан чĕлхине тăрăшса вĕренет. Хăйне малашлăхра питĕ кирлĕ пуласси пирки иккĕленмест. Маттурскер республикăри «Чĕлхе – ăнăçу валли» конкурсра иккĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Наталья Васильевна Алексеева вĕрентекен кăсăклантарма та, хавхалантарма та пĕлет, çавăнпах çак предмет патне туртăм та пысăк пуль.

Кăçал Вова районти акăлчан тата биологи предмечĕсен олимпиадисенче çĕнтернĕ, историпе виççĕмĕш вырăна тухнă. Вĕренӳ уншăн – пĕрремĕш вырăнта. Тăрăшулăхне пула маттурскер районта «Ылтăн ача» ята тивĕçнĕ.

Аппăшĕ Наташа самбо тата дзюдо енĕпе питĕ пултаруллă, спортăн çак тĕсĕсемпе çĕнсе илнĕ медаль те нумай унăн. Вова та самбо кружокне çӳрет. Пурăна-киле вăл та ăмăртусене хутшăнса çитĕнӳ кăтартĕ-ха.

## Вĕренӳ малти вырăнта пултăр!



«Спорт, спорт тата тепĕр хут спорт!» – тет çиччĕмĕшĕнчи Андрей Захаров. Ăмăртусене хутшăнса Раççейĕн тĕрлĕ хулинче пулса курма тӳр килнĕ ăна: Сочире, Владимирта, Козьмодемьянскра, Хусанта тата ытти çĕрте те. Самбопа дзюдо енĕпе иртекен ăмăртусенче тăтăшах çĕнтерет. Пирĕн çĕр-шывра спортăн çак тĕсĕсем яланах пĕрле аталаннă. Çавăнпа Андрей иккĕшĕпе те питĕ туслă. Малтан Çĕрпӳ районĕн «Ылтăн спортсменĕ» Шупашкара тренер патне çӳренĕ. Ăна самбо енĕпе хатĕрлекенĕ Алексей Аркадьевич Андреев, дзюдопа вара – Виталий Павлович Иванов. Халĕ Чурачăкрах самбо секцийĕ ĕçлет. Çĕнтерес тесен йывăрлăхсене парăнтарма пĕлмелле. Андрей та çак шухăшпа килĕшет. 2004 çулта Афинăра иртнĕ Олимп вăййисене ас тăватăр-и? Андрей вара манса кайман-ха. Шăпах çавăн чухне пирĕн çĕр-шывăн паллă дзюдоисчĕ Дмитрий Носов пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерчĕ-çке: çурма финалта аллине хуçнăскер бронзăпа та килĕшме пултаратчĕ, анчах вăл парăнмарĕ, грек кĕрешӳçине çĕнтерсе ылтăн медале тивĕçрĕ. «Манăн та Дмитрий Носов пек çирĕп тĕллевлĕ пулас килет», – тет Андрей.

Пĕтĕм Раççей шайĕнчи спортсмен вĕренӳ пирки те манмасть. Ашшĕ-амăшне чунтан хисеплекен ача кашни сăмахне тĕпе хурать, вĕсем: «Вĕренӳ пур пĕрех малти вырăнта пулмалла», – тенине ăса хывать. Çавăнпа вăл тата спорт юнашар пыма тивĕç тесе шутлать арçын ача.

«Пиллĕк» паллăпа ĕлкĕрсе пыраканскер предмет олимпиадисене те хастар хутшăнать. «Физика учебникне вĕренме тытăнсанах малтанхи кунсенчех ăна вĕçне çитиех вуласа тухнă. Халĕ эпĕ урок иртеретĕп, Андрей вара пĕтĕмпех пĕлет те ĕнтĕ», – тет Эльвира Федоровна вĕрентекен кăмăллăн кулса. Арçын ача питĕ тăрăшуллă пулнине, çĕнĕлĕхе хăвăрт ăса хывнине палăртать вăл. Андрей вырăс чĕлхипе тата литературипе иртнĕ республикăри дистанциллĕ олимпиадăра, акăлчан чĕлхи предмечĕпе «Чĕлхе ăнăçу валли» конкурсра çĕнтернĕ.

Хаваслă сăн-питлĕскер тунсăхлама пĕлмест пуль. Çак хастар ачапа пуплеме те кăмăллă. Андрейăн малалла ăнтăлас туртăмĕ нихăçан та ан иксĕлтĕр! Тантăшĕсемшĕн вăл яланах ырă тĕслĕх пултăр.

## Атте-аннене тав!

Çемьере пĕри маттур пулсан тепри те айккинче юлмасть. Диана Захарова та пиччĕшĕ пекех «пиллĕкпе» вĕренет тата спортпа туслă. Эрнере виçĕ хутчен Шупашкара искусствăсен шкулне çӳрет вăл. Халĕ гитарăпа выляма хăй тĕллĕн хăнăхать, авăн уйăхĕнчен вара ятарласа вĕренме Шупашкара çӳресшĕн.

Ӳкерес ăсталăх хĕр ачана ашшĕнчен куçнă. Ăна çут çанталăк теми çывăхрах. Килти стенасем ĕçĕсемпе тулсах ларнă. Диана аппликаци тата тĕрлĕрен япала тума та юратать, нумай конкурсра çĕнтерет. Питĕ тăрăшуллăскерĕн йăлтах ăнăçлă пулса пырать. Вĕренӳре хастарскер çулсеренех вырăс чĕлхипе тата литературипе иртекен районти олимпиадăра çĕнтерет. Акăлчан чĕлхипе районта иккĕмĕш, республикăра виççĕмĕш тухнă.

Вăл ташлать те, юрлать те, сăвă та çырать. «Хайлавăмсенче çемьене, атте-аннене юратма тата хисеплеме чĕнсе калатăп. Тантăшсем валли юмахсемпе калавсем те çыратăп, вĕсене пĕр тетраде пухса пыратăп. Аннен çуралнă кунĕ тĕлне сăвă çыртăм. Хайлавăмсем кăмăла кура çуралаççĕ», – тет вунă çултанпа поэзипе кăсăкланакан хĕр ача. Ганс Христиан Андерсен юмахĕсене юратса вулать вăл, хăй те ун пек çырма тăрăшать.

## Фелтинг ăстаçи



Вуннăмĕшĕнчи Виктория Анисимова – район пуçлăхĕн стипендиачĕ. Пĕр çул Чăваш наци лицейĕнче вĕреннĕ те интернат-шкул хупăнсан каяллах таврăннă. «Вика Шупашкара кайсан питĕ кулянтăмăр, – теççĕ Чурачăк шкулĕн вĕрентекенĕсем. – Çакăн пек маттур хĕр ачана вĕçертес килмест-çке. Вăл каялла килнишĕн вара питĕ савăнтăмăр».

Лицейри пĕр çул Вика асне ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлнă. Кунта вăл туслăх мĕн иккенне аван ăнланса илнĕ. «Чăн-чăн тус йывăрлăхра пăрахмасть. Ун пек юлташсем нумай мар, мана çитет. Лицейри тусăмсемпе халĕ те çыхăну тытатпăр, пĕр-пĕрин патне час-часах шăнкăравлатпăр», – тет Вика. Çав çулах вăл «Çăлтăрчăк» конкурса хутшăннă, чăваш чĕлхи пĕлĕвне тĕрĕслесе виççĕмĕш вырăн йышăннă.

Хастар вĕренекен физикăпа математика предмечĕсене питĕ юратать. «Çиччĕмĕш класра физика пуçлансанах ку ача техника енĕпе кайĕ терĕм, – каласа парать Эльвира Федоровна. – Тăххăрмĕш класс хыççăн вăл физикăпа экзамен тытрĕ, чи нумай балл пухрĕ».

Вика вулама кăмăлланăран шкул кĕнекине кĕскетсе кĕртнĕ хайлавсен тулли вариантне вулавăшра тупса алла илет. Тĕслĕхрен, Леонид Агаковăн «Ылтăн вăчăрипе» пĕтĕмпех паллашнă.

Ашшĕпе амăшĕ çăматă йăвалаççĕ, хĕр ачан та кăсăкланăвĕ çавăн евĕртерех – вăл фелтингпа (арламан çăмран çемçе япаласем туни) ĕçлет. Пĕлтĕр чечеклĕ берет хатĕрлесе районти наукăпа практика конференцийĕнче виççĕмĕш вырăн йышăннă. Конкурса хутшăнма ăна технологи вĕрентекенĕ Татьяна Витальевна Иванова пулăшнă.

Ăста çынна яланах хисеплеççĕ. Шкулта та, шкул тулашĕнче те хастарлăхпа палăрать Вика.

## Кремль Ёлкинче савăнтăм

Тăваттăмĕшĕнчи Вероника Захарова кăçал Кремль елкине кайса килнĕ. Ăна уявра питĕ килĕшнĕ. «Эпир хăна çуртĕнче пурăнтăмăр. Елка питĕ çӳллĕ те хитреччĕ. Тус-юлташ нумай тупрăм. Халĕ вĕсемпе Интернетра çыхăну тытатпăр», – тет Вероника. Юмахри сăнарсем – Конек-Горбунокпа Йăван – ачасене савăнăçлă кăмăл-туйăм парнеленĕ. Театрта вара «Фунтикĕн çĕнĕ мыскарисене» кăтартнă. «Пылак кучченеççем те пачĕç. Анчах эпĕ вĕсене киле çитиччен çул çинчех



çисе ятăм», – кулать Вероника. Тахçан аппăшĕ те çак пысăк уява кайса курма тивĕçнĕ иккен. Сăмах май хаваслă хĕр ача вун пĕрмĕш класра вĕренекен аппăшĕнчен тĕслĕх илме тăрăшать. Кристина еплерех тăхăнни те ăна питĕ килĕшет. Хăш чухне аппăшĕпе йăмăкĕ пĕр-пĕринчен сĕнӳ-канаш та ыйтаççĕ. Пĕр тăвансем хушшинче ăнлану пулни вара мĕн тери аван.

Вероникăн ача садĕнчех шкула каяс килнĕ. Ертӳçĕ пулма та ĕмĕтленнĕ вăл. Халĕ шухăшланине пурнăça кĕртет, хитре калаçаканскере уявсене ертсе пыма шанаççĕ. Вероника сцена çине тухсанах çынсем тăвăллăн алă çупаççĕ те хĕр ачан кăмăлĕ çав тери çĕкленет. Класра чи лайăх вĕренекенсенчен пĕри вăл.

Канмалли кунсенче шăллĕпе Ромăпа урамра выляма кăмăллаççĕ. Кил умне Юр кĕлетке те туса лартнă. Тепĕр чухне вара, пӳртрен тухас килмесен, шкулла та выляççĕ. Вероника шăллĕне сас паллисене вĕрентнĕ, халĕ сыпăкăн-сыпăкăн вулаттарать. Кĕçĕнни ача садне кăна çӳрет-ха, вăл питĕ ăслă пулни халех сисĕнет.

Шăпăрлан аппăшне питĕ юратать. «Шăмат кун Ромăн садике каймалла мар. Эпĕ шкултан киличчен вара шăллăм питĕ тунсăхлать, мана курсанах ыталаса илет», – тет Вероника.

# Пирӗн пултарулӑх

«Тантӑш» хаҫатӑн хисеплӗ те маттур ӗҫченӗсем!

Сире пурне те Ҫӗнӗ ҫулпа чӗререн саламлатӑп, пурнӑҫра ҫирӗп сывлӑх, ӗҫре ӑнӑҫу сунатӑп.

Сирӗн хаҫата эпӗ киленсех вулатӑп. Вӑл ачасене кӑна мар, пирӗн ҫулхисене те кӑсӑклантарать. Кашни хайлавӗ, калавӗ, сӑвви, пьеси, шӳчӗ тата ытти материал та вулакана шутлаттараҫҫех. Уйрӑмах ҫамрӑксене тӗрӗс пурӑнма вӗрентеҫҫӗ, вӑхӑтра пулӑшаҫҫӗ, йӑнӑшсран асӑрхаттараҫҫӗ, ӗҫлеме хавхалантараҫҫӗ.

«Тантӑш» хаҫата эпӗ пӗрремӗш хут ҫыратӑп. Вӑл «Пионер сасси» ятпа тухнӑ чухне манӑн сӑвӑсем кун ҫути куратчӗҫ. Ун чухне Шӑмӑршӑри Палтиел шкулӗнче ӗҫлеттӗм. Малтанхи сӑвӑ 1966 ҫулхи утӑ уйӑхӗн ҫирӗм улттӑмӗшӗнче тухнӑ хаҫатра пичетленнӗччӗ, «Анннене ялан итлетпӗр» ятлӑччӗ. Район хаҫатне те ҫыраттӑм. «Ҫамрӑк коммунист» хаҫат та манӑн сӑвӑсене пичетлесе савӑнтаратчӗ (1966 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗн 29-мӗшӗнче тухнӑ хаҫатра «Пурнӑҫ хаклӑ пуринчен» сӑвӑ пӗрремӗш хут пичетленчӗ). Тата чылай ҫыраттӑм пулӗ. Анчах куҫ чирӗ аптӑратнӑ пирки 1978 ҫултанпа ҫырман. Тухтӑрсем хӑрах куҫне кӑшт куракан турӗҫ. Тавтапуҫ вӗсене. 2004 ҫулта тепӗр хут ҫырма пуҫларӑм, «Чӑваш хӗрарӑмӗ» хаҫатпа туслашрӑм. Чылай-чылай сӑвӑ-калав пичетленчӗ. Тайма пуҫ Маргарита Михайловнӑна!

Кӑҫал Лаша ҫулӗ. Пӗчӗк чухнех лашасене юрататтӑм, халь те вӗсем манӑн ӑшра, чунра, чӗрере. Ҫак сӑвва юратнӑ январсене халалласа ҫыртӑм.

Сире хисеплесе, ыр сунса

*Вячеслав МИХАЙЛОВ.*

Элӗк районӗ,
Чӑваш Сурӑм.

## Пӗчӗкрен эп юрататтӑм...

Питех хытӑ юрататтӑм
Пӗчӗкрен лашасене.
Йӑпанаттӑм, ачашлаттӑм,
Тасататтӑм ҫилхине.

Ҫын пекех вӗсем пӗлетчӗҫ
Кам пит лайӑх пӑхнине.
Аякран мана сисетчӗҫ
Тапӑра эп пынине.

Хӑратмасӑр тыттаратчӗҫ,
Калаҫаттӑмччӗ хуллен.
Лӑп тӑрса утлантаратчӗҫ,
Чуптараттӑм ерипе.

Ачаран кӳлме вӗреннӗ,
Ус курма ут хатӗрне.
Лашана ялан хӗрхеннӗ,
Тытман пушӑ ӗмӗрне.

Темле йывӑр, терт пулсан та
Нӑйкӑшмасть вӑл, калаймасть.
Ыратсан, ыраттарсан та
Пулӑшу та ыйтаймасть.

Лашасем выртса канмаҫҫӗ,
Талӑкпех ура ҫинче.
Ывӑнсан та шарламаҫҫӗ,
Куҫҫуль ҫеҫ куҫӗсенче.

Ҫавӑнпа ӑна шеллеттӗм,
Тӑрӑшаттӑм упрама.
Сахалрах лавне тиеттӗм,
Ытлашши хӑваламан.

Паянччен асра ман юлнӑ
Выртмара ҫӗр каҫнисем.
Мӗн ирччен вылянӑ, кулнӑ.
Ӑҫта ҫӗтнӗ ыйхисем?

Чи асли юмах пуҫлатчӗ
Кӑвайтне чӗртсе ярсан.
Вӗтӗр-шакӑрӗ тӑнлатчӗ
Хӑлхине чӑнк тӑратса.

Чӑннипех те кӑмӑллаттӑм
Урхамах кӗҫеннине.
Тӗлӗнсе кӑна пӑхаттӑм
Чӗвен тӑнӑ ут ҫине.

Пит хаваслӑ итлемешкӗн
Лашасем тулхӑрнине.
Сӑлтав пулнӑ шикленмешкӗн
Илтсенех хартлатнине.

Тем шутланӑн туйӑнатчӗ
Ут пуҫне ухса тӑни.
Тем систернӗн курӑнатчӗ
Урипе кукалени.

Чунӑма уҫса яратчӗ
Тихасем вӑй выляни.
Эх, мӗнле савӑнтаратчӗ
Лашана шыва кӗртни.

Тӑрантас, хыҫлӑ ҫуни те
Илӗртнех ларса курма.
Ӑмӑртса утпа чупни те
Пулӑшнах хастар пулма.

Лаша урлӑ алӑ панӑ
Тус-юлташ тупа тусан.
Ак мӗнле ӑна хакланӑ
Ҫынсем ӗлӗк-авалтан.

– Урхамах – пӗр пурнӑҫ, – тенӗ.
Йӑнӑшман нихҫан ӗҫчен.
Хӑмласассӑн хӗпӗртенӗ.
Кӗсре, ӑйӑр – тиркемен.

Шутласан, ҫын ӗмӗрленӗ
Лашапа хӑй пурнӑҫне.
Тар тӑктарнӑ, хӑй ӗҫленӗ
Пӗр курмасӑр канӑҫне.

Питӗ шел, манса пыратпӑр
Ҫак сӑваплӑ чӗр чуна.
Унсӑрах вӗт ак юлатпӑр –
Ку вара йӗплет чуна.

Кун пек пулӑм ан ҫыхлантӑр
Нихӑҫан та ҫын ҫумне.
Лаша пулнӑ, пур, сыхлантӑр,
Ан ҫухалтӑр ӗмӗрне!

## Спорт – пирӗн тус

* * *

Спортпа туслӑ эп пуласшӑн,
Хамӑн сывлӑха упрасшӑн.
Пурнӑҫри чи хаклӑ пурлӑх –
Ман шутпа, чи ҫирӗп сывлӑх.

*Ангелина ТОЛКОВА,*
*5 "б" класс.*

* * *

Спорта эпӗ юрататӑп,
Тӗрлӗ секцие васкатӑп.
Бокс ваййине кӑмӑллатӑп,
Хоккейла та эп вылятӑп.

*Даниил ЧЕРНОВ,*
*5 "б" класс.*

* * *

Сывлӑха упрас тесен
Спортпа туслӑ пулмалла.
Ирӗн-касӑн кунсерен
Хусканусем тумалла.

*Диана СКВОРЦОВА,*
*5 "б" класс.*

* * *

Ҫирӗп пурнӑҫ йӗркине
Кашни пӑхӑнтӑр тесен
Спортпа туслӑ пулмалла,
Сывлӑха упрамалла.

*Ангелина ПЕТРОВА,*
*5 "б" класс.*

Тӑвай районӗ,
Тӑвай шкулӗ.

## Анне

Манӑн анне пит ӗҫчен!
Ир-ирех тӑрать вӑл.
Эпӗ шкула кайиччен
Пӑтӑ пӗҫерет вӑл.

Пӑтти тутлӑ та вара!
Эп ҫисех яратӑп.
Сехет ҫине пӑхатӑп та
Шкулалла чупатӑп.

## Ман паян ҫуралнӑ кун



Ман паян ҫуралнӑ кун,
Ҫитӗнетӗп кашни
кун.
Халӗ эп вун
иккӗре,
Кӗҫех пулӑп
ҫирӗмре.

Вӗренетӗп
«пиллӗкпе»,
Пур «тӑваттӑ»
дневникре.
Хӑш чух «виҫҫӗ» те лекет,
Унран хӑтӑлас килет.

Кулянмастӑп эп пӗрех,
Тӑрӑшатӑп кулленех.
Ӳссен кайӑп хулана –
Манӑн ҫӗвӗҫ пулмалла.

Анне вӗренме хистет:
«Пысӑк ҫын пулатӑр», – тет.
Эпӗ халь вун иккӗре,
Кӗҫех пулӑп ҫирӗмре,
Вӗренсен Шупашкарта
Ӑслӑ пулӑп эп унта.

*Галина МАКСИМОВА.*

Муркаш районӗ,
Шетмӗпуҫ шкулӗ.

## Пултаруҫӑ

Ирех эпӗ вӑранатӑп,
Пулӑшатӑп аттене.
Тӑхӑнатӑп сӑран атӑ,
Илтӗм пӗчӗк витрене.
Уттаратӑп вӑрмана,
Хура ҫырла пуҫтарма.

*Родион АЛЕКСЕЕВ.*

Сӗнтӗрвӑрри районӗ,
Карапаш шкулӗ.

## Кун йӗрки

Ирхине ирех тӑратӑп,
Аннене эп пулӑшатӑп.
Урама тухса чупатӑп,
Шӑм-шака та хускататӑп.

Кӑшт чупсан киле кӗретӗп,
Эп ирхи апат ҫиетӗп.
Унтан шкула пит васкатӑп,
Вӗренӳре тӑрӑшатӑп.

Спорт ваййине кӑмӑллатӑп,
Тӗрлӗ кружока ҫӳретӗп.
Ӑмӑртӑва хутшӑнатӑп,
Шкул чысне ҫӳле ҫӗклетӗп.

Кӗнеке те эп вулатӑп,
Пур ҫӗре те ӗлкӗретӗп.
Кун йӗркине пӑхӑнатӑп,
Сывлӑха ҫирӗплететӗп.

Ҫирӗп сывлӑхлӑ пулар!
Сывлӑх пулсан ҫын ӗҫлет,
Ялан ӗҫпе пиҫӗхет.
Ҫемье вучахне чӗртет,
Ачине те ӳстерет.

Пурнӑҫ мӗнле пулнине
Ачине те вӗрентет.
Ҫирӗп сывлӑх йӗркине
Пӑхӑнмашкӑн вӑл хистет.

*Елена СОРОКИНА,*
*6 "б" класс.*

Тӑвай районӗ,
Тӑвай шкулӗ.

## Тав тӑваҫҫӗ кайӑксем

Туса ҫакрӑм сырӑшсем,
Вӗҫсе килчӗҫ кайӑксем:
Ҫерҫисем, кӑсӑясем,

Хӗрлӗ питлӗ уйӑпсем.
Сӑхрӗҫ тулӑ пӗрчине,
Тиркемерӗҫ саллине.

Тав тӑваҫҫӗ хуҫине,
Сырӑш ҫакнӑ ачине.

*Никита ПЫРКИН,*
*4 класс.*

Комсомольски районӗ,
Шурут шкулӗ.

## Кушак ҫури

Пирӗн кушак ҫури пур.
Мӗн тери-ҫке вӑл маттур!
Шӑшисене хӑвалать,
Ҫерҫисене хӑратать.
Кӑмӑллать вӑл хӑймана,
Юратать тата мана.

*Мария СМИРНОВА,*
*2 класс.*

Комсомольски районӗ,
Шурут шкулӗ.

## Ҫӗнӗ ҫул

Ҫӗнӗ ҫулӗ ҫывхарать,
Пирӗн ӗҫ нумайланать.
Уроксем вӗренмелле,
Юррине ас илмелле.

Хӗл Мучи кунта килет,
Инҫетрен, пӑр ҫӗрӗнчен.
Ҫӗнӗ ҫитӗнӳ кӗтет
Кӑвак Лаша ҫулӗнче!

*Ирина НИКИФОРОВА,*
*4 класс.*

Комсомольски районӗ,
Шурут шкулӗ.

## Эпир никама та манман

Мӑн асанне кантӑкран пӑхать,
Хӑй куҫҫульне вӑрттӑн шӑлать.
Вӑл кама чунтан кӗтет-ши?
Мӗншӗн вӑрттӑн ҫеҫ йӗрет-ши?

Тӳсеймерӗм пӗринче,
Эпӗ ыйтрӑм шеллесе.
Мӑн асанне пуҫран шӑлать,
Мана ҫапла ӑнлантарать.

«Мӑшӑра вӑрҫа ӑсатрӑм
Хӗрӗх пӗрремӗш ҫултах.
Кӗтме пур пӗр пӑрахмарӑм
Паянхи кун таранах».

Мӑн асанне тӗрке салтать,
Сӑн ӳкерчӗк кӑтартать.
Виҫ кӗтеслӗ ҫырусем,
Асатте саламӗсем.

Алла тытрӑм ҫырӑвне,
Эп пӗлесшӗн хыпарне.
Мӑн асанне вара пӗлет,
Пӑхмасӑрах аса илет.

«Эпӗ кӗтрӗм, кӗтрӗм, кӗтрӗм,
Эп шанмарӑм никама.
Халь, мӑнукӑм, эп пӗлетӗп,
Килеймест вӑл ман пата.

Айта, мӑнукӑм, кайӑпӑр
Ялти палӑк ҫывӑхне.
Унта эпир асӑнӑпӑр,
Манӑн мӑшӑрӑм ятне».

Халӗ эпӗ те пӗлетӗп
Мӑн асанне хуйхине.
Нихҫан манас марччӗ тетӗп,
Мӑн асаттен ыр ятне.

Ҫук, манмастпӑр нихӑҫан
Паттӑрла пуҫ хунине.
Асра тытӑпӑр ялан
Тамӑкра ҫуннисене.

*Элина ИВАНОВА,*
*8 класс.*

Елчӗк районӗ,
Кӗҫӗн Таяпа шкулӗ.

## Кӗркунне

Таврара кӗрхи кунсем,
Шав ҫӑваҫҫӗ ҫумӑрсем.
Кайӑксем вӗҫсе каяҫҫӗ,
Сӗм вӑрмансем тунсӑхлаҫҫӗ.

Пушӑ хирсем анаслаҫҫӗ,
Тарӑн ыйхӑна путаҫҫӗ.
Ӑшӑ кунсем ҫухалаҫҫӗ,
Хӗл ачисем ҫывхараҫҫӗ.

Шур юр пӗрчисем ӳкеҫҫӗ,
Пӗрле выляма чӗнеҫҫӗ.
Кӗҫех ҫитӗ сивӗ хӗл,
Тусӑм, эсӗ ҫакна пӗл.

## Кушак ҫури

Кушак ҫури Мурка ятлӑ,
Сывӑх тусӑм маншӑн хаклӑ.
Пӗчӗкскерне юрататӑп,
Хамӑн ҫума чӑмӑртатӑп.

Ӑнланать юратнине,
Кӑмӑллӑн парать сасне.
Сӑнаса куҫран пӑхать,
Вӑл та мана юратать.

Лартса парӑп ӑш сӗтне,
Анне суса кӗнине.
Апат ҫисе тӑранать,
Ман ҫума кӗрсе ларать.

## Ҫуркунне

Шӑнкӑр-шӑнкӑр сас парса
Ҫуркунне васкарӗ.
Сарӑ хӗвел вӑтанса
Ӑшшӑн саламларӗ.

Кайӑк-кӗшӗк чарӑнми
Юрӑ кӗвӗлерӗ.
Ҫурхи кунӗ ытарми
Кӑмӑла ҫӗклерӗ.

Ача-пӑча савӑнса
Урама васкарӗ.
Хавас кулӑ таврара
Каҫченех янрарӗ.

## Йӑмӑк

Пӗчӗк йӑмӑк – Урине.
Кӑмӑллатӑп куллине.
Кунӗпех пӗрле вылятпӑр,
Икӗ тӑван
савӑнатпӑр.
Тӗрлӗ ташӑсем
ташлатпӑр,
Ҫепӗҫ юрӑсем
юрлатпӑр.
Пӗр-пӗриншӗн
тунсӑхлатпӑр,
Пӗрле пулсан
савӑнатпӑр.



*Маша КОШЕЛЕВА.*

Йӗпреҫ районӗ,
Ҫӑкалӑх шкулӗ.

## Манӑн анне

Ман анне ирех тӑрать,
Вырӑхсене пуҫтарать,
Ӗнине суса кӗрет,
Пире апат ҫитерет.

Хӑйӗн ӗҫне кайиччен
Килтине те пӗтерет.
Эпӗ шкула утиччен
Пӗр канмасӑр вӑл ӗҫлет.

Эп аннене пулӑшатӑп,
Хӑш чух чашӑк та ҫӑватӑп,
Урай шӑлса тасататӑп –
Ӗҫлеме эп юрататӑп.



Халӑх ӗлӗкрен калать:
«Ӗҫчен ҫынна ял савать».
Эп те пулӑп анне пек,
Ӗҫлӗп, тӑрӑшӑп ун пек.

*Дмитрий СЕМЕНОВ,*
*3 класс.*

Куславкка районӗ,
Кунер шкулӗ.

## Анне

Анне, эсӗ чи хитри,
Чи хаклӑ, чи сывӑххи,
Эсӗ питӗ ир тӑратӑн,
Пур ӗҫе те пурнӑҫлатӑн.

Вырӑхсене ҫитеретӗн,
Тутлӑ апат пӗҫеретӗн,
Пире ӑшшӑн вӑрататӑн,
Хӑв ӗҫе тухса каятӑн.

Эпир сана юрататпӑр,
«Тавтапуҫ!» – тесе калатпӑр
Эсӗ пире ҫуратнишӗн,
Ҫак тӗнчере пурӑннишӗн.

*Аня НИКОЛАЕВА.*

Куславкка районӗ,
Кунер шкулӗ.

# Страус

Страус – ҫӗр ҫинчи чи пысӑк кайӑк. Вӑл ҫынран ҫӳллӗрех, вӑтамран икӗ метр ҫурӑ тӑршшӗ, йывӑрӑшӗ – 120 килограма яхӑн. Аҫине автан теҫҫӗ, амине вара – чӑх. Вӗсенчен ытларахӑшӗ Тӗп Африкӑра пурӑнать. Ҫак кайӑкӑн темиҫе тӗсӗ пур. Анчах пурне те вӗҫме пӗлменни пӗрлештерсе тӑрать.

Сехетре ҫитмӗл километр хӑвӑртлӑхпа чупакан кайӑка пӗр спортсмен та хӑваласа ҫитеймест. Уринче икӗ пӳрне кӑна унӑн. Ҫитменнине, пӗри тепринчен чылай пысӑк. Чупнӑ чухне пысӑк пӳрни ҫине ытларах таянать.

Тӑшманран тарнисӗр пуҫне вӑл вырӑнтан хускалмасӑр та хӳтӗленме пултарать. Кунта каллех урисем пулӑшаҫҫӗ, каратэ шкулне ҫӳренӗнех тапма пултарать вӑл вӗсемпе. Ҫапла вара пӗренене ҫурмаран та хуҫаять!



Тин тухнӑ чӗпписем ытла та хӳтлӗхсӗр, вӗсене тискер кайӑк ҫӑмӑллӑнах тапӑнӗ. Анчах пӗчӗкскерсем те чееленме пӗлеҫҫӗ. Хӑрушлӑха туйсанах ҫӗре ӳкеҫҫӗ те хускалми выртаҫҫӗ. Тискер кайӑк вара страус чӗпписене вилнӗ пуль тесе тӗкӗнмест.

Страус пуҫне хӑйӑр ӑшне чикни – шӳт кӑна. Пуҫӗ тусанпа витӗннӗ ҫӗр тӗслӗ, кӗлетки тӗттӗм пулнӑран тискер кайӑк ӑна тӗмӗ вырӑнне йышӑнать. Пуҫӗпе мӑйне тӑсса выртнӑ чухне е курӑк ҫинӗ вӑхӑтра пуҫне ҫӗр ӑшне чикнӗ пек курӑнма пултарӗ. Ҫамрӑккисем вара мӗнрен те пулин хӑрасан пуҫне хӑйӑр ҫине хураҫҫӗ. Шӑпах ҫавӑн чухне эпир йӑнӑшма пултаратпӑр та.

Тискер кайӑксенчен хӳтӗленме пӗлнӗренех ҫак кайӑк ҫитмӗл ҫула ҫитиччен пурӑнать!

Страуссем пирӗн патри хӗл кунӗсене лайӑх чӑтса ирттереҫҫӗ. Анчах кунта та шикленмелли тупӑнать.

**Пӑр – Раҫҫей страусӗсен чи пысӑк хӑрушлӑхӗ.** Тарӑн юр ҫинче ҫӑмӑллӑнах утаҫҫӗ вӗсем, анчах пӑр ҫинче шуса ӳксен урине хуҫма пултараҫҫӗ, ӑна вара сиплеме май ҫук.

**Хурт-хӑмӑр тата сӑпса – чӑн-чӑн тӑшман!**

Пӗр-пӗр хурт-кӑпшанкӑ страус тӗкӗ ӑшне кӗрсе кайни хӑрушӑ мар. Кайӑк ӑна хӑвӑтлӑ сӑмсипе самантрах туртса кӑларӗ. Анчах хурт-кӑпшанкӑ пуҫ патӗнчен вӗҫсе иртет пулсан страус ӑна тытатех. Хурт-хӑмӑра е сӑпсана ҫӑтса ярсан лешсем, паллах, ҫыртса илӗҫ. Вӗсенчен вара страусӑн аллерги пуҫланать.

# Вырӑссен аслӑ ҫар пуҫӗ



«Вӗренӳре йывӑр та, ҫапӑҫура ҫӑмӑл», – тенине илтнӗ-и? Ҫак аслӑ сӑмахсене калаканӗ – Александр Васильевич Суворов генералиссимус.

Ҫапӑҫу хирӗнче ӑна никам та путлантарайман. Пӗрремӗш ҫӗнтерӗвӗ вара ача чухнех савӑнтарнӑ. Ку вӑл – хӑйӗн вайсӑрлӑхне тӗп туни. Александр Суворов лутра пӳллӗ тата хыткан пулнӑ, часчасах чирленӗ. Анчах арҫын ачан хавшак кӗлеткинче хăвалтӑ чун пурӑннӑ иккен.

Александр истори, вӑрҫӑ тата ҫар пуҫӗсем ҫинчен калакан кӗнекесем вулама юратнӑ. Географие, историе, темиҫе ют чӗлхене питӗ аван пӗлнӗ, поэзие те кӑмӑлланӑ.

Ҫар ҫынни пулма ҫирӗп тӗллев тытнӑскер ачаранах хӗсмете хатӗрленме пуҫланӑ. Хуть те мӗнле ҫанталӑкра та сывлӑхне пиҫӗхтернӗ вӑл: чупнӑ, сикнӗ, ишнӗ, лашапа ҫӳренӗ. Хӑйне сивве, йывӑр тиеве, ахаль тумтирпе апат-ҫимӗҫе хӑнӑхтарнӑ.

Вун ҫиччӗре Суворовӑн ҫар пурнӑҫӗ пуҫланнӑ. Салтакӑн кӑткӑс аслӑлӑхне вӑл кӑсӑклансах алла илнӗ: пӑшалтан пеме, штыкпа тата хӗҫпе усӑ курма вӗреннӗ.

Суворов ҫӳллӗ шайри культура ҫынни пулнӑ. Хӑйне пӑхӑнакансене – офицерсемпе салтаксене – ӑнланма тата хисеплеме пӗлнӗ. «Салтак маншӑн хамран та хаклӑрах», – тенӗ.

Ҫар пуҫӗ салтаксем мӗн ҫиесси, мӗн тӑхӑнасси тата сывлӑхӗ пирки хӑех шухӑшланӑ. Ҫула тухсан та, ҫар лагерӗнче чухне те, ҫапӑҫура та – яланах вӗсемпе пӗрле. Йывӑр вӑхӑтра шӳтлесе кӑмӑла ҫӗклеме те пултарнӑ. Салтаксем ӑна юратнӑ, ун хыҫҫӑн таҫта кайма та хатӗр пулнӑ, пӗрле ҫӗнтернӗ.

Тӑван Ҫӗр-шыва парӑнни, хӑюлӑх, тӳр-кӑмӑллӑх, шанчӑклӑх, ҫине тӑни, ҫар ӗҫне пӗлни, ҫӳллӗ шайри культура, салтака юратни, хӑйӗн хыҫҫӑн ертсе пыма пӗлни – ҫак паха енсем Суворова яланах ҫӗнтерме пулӑшнӑ.

## Суворов каларӑшӗсем

Пуҫ касакан та вашават пулаять.

Ӗҫ ӑстаран хӑрать.

Ҫирӗп ыйтни – ҫӗнтерӳ амӑшӗ.

Вӗрие юрататӑн пулсан, сиввине те хапӑл пул.

Хутшӑнури таса кӑмӑл тата калаҫури тӗрӗслӗх – акӑ вӑл туслӑх.

Темле йывӑр килсен те шанӑҫна ан ҫухат, вӑй-хӑват пур чухне ан парӑн.

Наянлӑх тулӑх пурнӑҫран ҫуралать. Кахаллӑх сӑлтавӗ – пуҫламӑшӗ ҫукки.

Хӑюлӑх кӑтартни сӑмахран та ытларах калать.

Вилӗмрен ан хӑра, ун чухне ҫӗнтеретӗнех. Икӗ вилӗм пулаймасть, пӗринчен вара пур пӗрех хӑтӑлаймӑн.

Курайманлӑх ӑс-тӑна тӗксӗмлетет.

Хӑв ҫапӑҫа вил, анчах юлташна ҫӑл.

Салтакӑн сывлӑхлӑ, харсӑр, ҫирӗп кӑмӑллӑ, тӗрӗс тата тӗн шухӑшлӑ пулмалла.

Сайра-хутра ҫеҫ пер, анчах тӗл лектер. Штыкпа ҫирӗп чик. Пуля йӑнӑшсан та штык йӑнӑшмасть: пуля – ухмах, штык – маттур.

Эпӗ капӑрлӑхсемпе илемлетмен тӗрӗслӗхе юрататӑп.

Ырӑ ӗҫсӗр чыс та, мухтав та пулаяс ҫук.

Малалла кайнӑ чухне каялла таврӑнма та пӗл.



Ҫывӑхри тӗллев инҫетринчен лайӑхрах.

Пысӑк мыскара пӗчӗк сӑлтавран пуҫланать.

Выҫлӑх – чи лайӑх эмел.

Пӗр килте икӗ хуҫа пулаймасть.

Укҫа хаклӑ, ҫын пурнӑҫӗ тата хаклӑрах, вӑхӑт вара – чи хакли.

Хаҫатсем тӑрӑх вӑрҫӑ ирттерекен ҫар пуҫне шел. Вӑл пӗлмелли ытти япала та чылаях.

Ӑсли ӑнсӑртран ҫапӑҫмасть.

«Пӗлме пултараймастӑп», – текен салтак юрӑхсӑр.

Тӗнчере сирме ҫук чӑрмав ҫук.

Хӑрушлӑха вырӑнта кӗтсе тӑриччен, ӑна хирӗҫ тух.

Итлени, вӗренни, ҫирӗп йӗркене пӑхӑнни, тасалӑх, сывлӑх, типтерлӗх, ҫӗкленӳл- лӗ кӑмӑл, хӑюлӑх – ҫӗнтерӳ.

Ҫамрӑк чухнех ҫывӑх ҫыннӑн йӑнӑшӗсене каҫарма вӗрен, хӑвӑнне вара – нихӑҫан та.

Хӑвӑртлӑх кирлӗ, васкани вара сиенлӗ.

Салтак вӑрӑ-хурах мар.

## Кӑсӑклӑ самантсем

* * *

Павел императорӑн ҫывхартнӑ чиновникӗнчен Суворов ҫыру илнӗ, унта ӑна пӗр офицерӑн чинне ӳс- терме сӗннӗ.

– Пӗр тивӗҫсӗре савӑнтарсан эпӗ ҫӗр-ҫӗр тивӗҫлине кӳрентерӗп. Ҫар хисепӗ маншӑн питӗ хаклӑ, – тенӗ Суворов.

* * *

Пӗррехинче Суворова хӑй ялан пулӑшса тӑнӑ ҫыннӑн пархатарсӑрлӑхӗ ҫинчен каласа панӑ.

– Эпӗ ҫакна асӑрхарӑм: ҫынсем кампа танлашаймаҫҫӗ е камран иртеймеҫҫӗ, юлашкинчен ҫавӑн тӑшманӗ пулса тӑраҫҫӗ. Ҫӗр тӳпене хӗвелӗн ырӑ шевлисемшӗн тата ҫумӑрӑн вӑй хушакан тумламӗсемшӗн мӗнпе тав тӑвать? Тусанӗпе! – кулса янӑ вӑтӑ ҫар пуҫӗ.

* * *

Кубань ҫулӗ ҫине тухсан Суворов ун тавралла ҫаврӑнса иртме шут тытнӑ. Сас-хура хӑвӑрт саралнӑ, кашни пуҫлӑх ҫар пуҫӗ хӑйӗн тӑрӑхне килессе кӗтнӗ. Вӑл чаплӑ уявсене тата хӑйне кӗтнине юратман: кирлӗ ҫӗре яланах ӑнсӑртран, никама систермесӗр ҫитнӗ. Каҫхине ахаль ҫунапах пӗрремӗш станцие ҫул тытнӑ. Кӗтсе илекен ватӑ капитан Суворова нихӑҫан та курман, каҫхи хӑнана юлташ пек йышӑннӑ, хӑйӗн пӳлӗмӗнче хӑналанӑ. «Эпӗ Суворов валли урхамах хатӗрлеме ҫитрӗм», – тенӗ ҫар пуҫӗ хӑйӗн чӑн-чӑн ятне пытарса. Капитан шӳтленӗ, пур генерал пирки те хурламалли сӑмах тупнӑ, Суворов ҫинчен вара ырӑ сӑмах ҫеҫ каланӑ. Хӑна хӑйне пӑхса яраканпа юлташла сыв пуллашнӑ та каллех ҫула тухнӑ. Ирхине капитан ҫыру илнӗ: «Суворов сирӗн патран иртсе кайрӗ, капитана каҫхи апатшӑн тав тӑвать, малашне те туслӑ пулма ыйтать».

* * *

1787 ҫулхи юпа уйӑхӗн пӗрремӗшӗнче Кинбург сӑмсахӗнче иртнӗ ҫапӑҫура Суворовӑн сулахай алли суранланнӑ. Лекӗр пӗрле пулманран ҫар пуҫӗ тинӗс патне кайса аллине казаксен старшинине ҫыхтарнӑ. Лешӗ унӑн суранне тинӗс шывӗпе ҫунӑ, галстукпа ҫыхнӑ. «Турӑ ҫырлах! – тенӗ Суворов. – Тавах! Пулӑшрӗ, тӳрех пулӑшрӗ! Аманнӑ тата аманман пур туркӑна та тинӗсе хӑваласа ярӑп». Сӑмахне тытнӑ вӑл: тӑшман ҫарне аркатнӑ.



* * *

1787 ҫулта пуҫланнӑ Турккӑ вӑрҫинче Раҫҫей ҫарӗпе пӗрлешиччен Австри ҫыннисем хӑйсене питӗ телейсӗр туйнӑ. Турккӑсем вӗсене тӑтӑшах ҫӗнтернӗ тата туписене туртса илнӗ. Потемкин кнеҫе Рымник ҫапӑҫӑвӗ ҫинчен пӗлтерӳ янӑ чухне Суворов курьера ҫапла калать: «Ҫак хыпара та ҫитер, вӑрҫӑ тупӑшне австриецсемпе тӑванла пайларӑм: вӗсен туписене хӑйсенех тавӑрса патӑм, турккӑсенне вара хамӑра илтӗм».

* * *

Польшӑна питӗ хӑвӑрт пӑхӑнтарма пултарнӑран Суворова фельдмаршал ятне панӑ. Жезл илсенех вӑл сасартӑк сикме тата чупма тытӑннӑ, ҫине-ҫинех: «Турӑ ҫырлах! Ҫӑмӑллантӑм, лайӑх сикетӗп», – тенӗ. Ҫапла Суворов тава тивӗҫлӗ ӗҫӗсемшӗн черетсӗрех, хӑйӗнчен ҫӳлерех тӑракан генералсенчен маларах ҫак ята илнине каласшӑн пулнӑ.

* * *

Иккӗмӗш Кӗтерне патша ҫывхартнӑ ҫыннисене час-часах пысӑк парнепе савӑнтарнӑ. Пӗррехинче кӑнтӑртан таврӑнсан Александр Суворова ылтӑнран тунӑ хаклӑ йышши парне панӑ, ун ҫинче патша ячӗн малтанхи сас паллине кевер чулпа ҫырнӑ. «Эпӗ усӑлса ҫӳренӗшӗнех ҫичӗ пин тенкӗлӗх япалана тивӗҫрӗм», – тенӗ ҫул пуҫӗ хӑйӗн ертӳҫине. Суворов яланах ыттисенчен урӑхларах курӑнма тӑрӑшнӑ, ҫакнашкал пурнӑҫ йӗрки унра никама пӑхӑнманлӑх туйӑмне ҫуратнӑ. «Пуҫна сивӗре, хырӑмна выҫӑра, урусене вара ӑшӑра тыт», – тенӗ Александр Васильевич. Шартлама сивӗре те аслӑ ҫар пуҫӗ питӗ ҫӳхе тӑхӑннӑ. Пӗррехинче Иккӗмӗш Кӗтерне патша ӑна чаплӑ кӗрӗк парнеленӗ те яланах унпа ҫӳреме хушнӑ. Итлемеллех. Суворов нихҫан та кӗрӗкрен уйрӑлман, ӑна пӗрле... чӗркуҫҫи ҫине хурса ҫӳренӗ.

*Лариса ПЕТРОВА пухса хатӗрленӗ.*

# Ыра тĕслĕх

УЯВ

## Кадетсен «Хĕллехи юмахĕ»



**Кăçалхи пĕрремĕш бал – кадетсен уявĕ – кăрлачăн çирĕммĕшĕнче Ача-пăча пултарулăх керменĕнче иртрĕ. Ăна Культура çулталăкне халаллана. «Хĕллехи юмаха» республикăри кĕçĕн тата 5-7 класссенчи кадетсем пуçтарăннă. Хастар арçын ачасемпе хĕр ачасем виçĕ номинацире тупăшрĕç: «Ятарлă ташă» (е «Стандарт»), «Ирĕклĕ ташă» (е «Формейшен») тата «Балри чи лайăх мăшăр». Хитре тумлă çĕре яхăн кадет зала пухăнсан пирĕн хушăра илемлĕхе курма тата хаклама пĕлекенсем пурришĕн кăмăл çĕкленчĕ.**

Уява уçаканĕ – Чăваш Республикин Вĕрентÿпе çамрăксен политикин министерствин тĕп специалисчĕ Инесса Владимировна Ядранская. Чи кĕçĕн хăнасем Шупашкарти 106-мĕш ача садĕнчен çитнĕ. Вĕсен пултарулăх ушкăнĕ илемлĕ юрăпа савăнтарчĕ. «Пирĕн пуласлăх пур-ха», – терĕ уява ертсе пыракан Олег Валентинович Савчук кĕçĕннисене кăмăллăн сăнанă май. Пурнăçра пĕрремĕш хут республика шайĕнчи уява хутшăнаканскерсем çак куна нумайччен асра тытĕç. Çавăн пекех кадетсене Шупашкарти 37-мĕш шкултан килнĕ çамрăк армеецсем те саламларĕç.



Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Октябрьски шкулĕнчен çитнĕ Клава Никонорова çиччĕмĕш класра вĕренет. Кадет балĕнче вăл унччен те пулса курнă-ха. Пур пĕрех хумханма пăрахаймасть. Çĕнтерес туйăм ниепле те канăç памасть-çке. Çак класа çÿреме пуçланăранпа унăн пурнăçĕ самай кăсăклăрах. Халĕ Клава автомат сÿтсе пуçтарма, тинĕс тĕввине çыхса салтма, пăшалтан пеме пĕлет. «Зарницăна» çÿрени те хăй евĕр пурнăç урокĕ парать.



Ывăл-хĕрĕ кадет класне çÿреме тытăнсан ашшĕ-амăшĕ те савăнать, хăй те çав сывлăшпах сывлать тейĕн. Çĕнĕ Шупашкарти 5-мĕш шкулти Юлиан Казаков кăçалхи вĕренÿ çулĕнче кăна çак класа куçнă, çапах ÿсĕмĕ сисĕнет те ĕнтĕ. «Ывăлăм çирĕп йĕркене пăхăнма пуçларĕ. Халĕ вĕсем хушма предметсене те вĕренеççĕ, тĕрлĕрен кружока çÿреççĕ тата пĕр кăмăллă пулма хăнăхаççĕ», – тет уява пĕрле килнĕ амăшĕ. Ольга Витальевна хăйĕн те час-часах ташлас кăмăл çуралнине палăртрĕ.

«Çакăн пек балсем ачана илемлĕхе курма тата туйма вĕрентеççĕ. Кадет вăл – пулас аристократ. Эппин, унăн хăйне хитре тытма пĕлмелле», – çапла шутлать Мукраш шкулĕнчен килнĕ пиллĕкмĕш класс ертÿçи Светлана Измайловна Рожкова. Çирĕм пилĕк çул шкулта ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет вăл, çак вăхăт хушшинче кадетсемпе нумай ĕçленĕ. Вĕренекенсене пултарулăхĕшĕн тата тăрăшулăхĕшĕн мухтать. Пиллĕкмĕш классем пĕлтĕр Республикăри «Кадетсен тĕрĕслевĕнче» иккĕмĕш вырăн йышăннă. Маттур ачасем ытти енĕпе те пултаруллă. Лиза Порфирьева сăн ÿкерессипе Пĕтĕм Раççей конкурсĕнче çĕнтернĕ. Настя Прохоровăпа Коля Блинов сăвă çыраççĕ. Катя Смирновăпа Кирилл Иванов шкул пурнăçĕнче уйрăмах хастарлăхпа палăрса значока тивĕçнĕ. Кашнин пирки мĕн те пулин калама пулать.

– Эпир «Ташлакан шкул» программăпа ĕçлетпĕр, ачасем эрнере икĕ хутчен кружока çÿреççĕ, – тет Людмила Александровна Митрофанова хореограф. – Унсăр пуçне ыр кăмăллăх ĕçсем те ирттеретпĕр: ваттисен, сусăрсен тата ача çуртĕсене çитсе ташă лартса паратпăр».

Пĕтĕмлетÿ самантне пурте чăтăмсăр кĕтрĕç. «Стандарт» номинацире çиччĕмĕшсем хушшинче Сĕнтĕрвăрри районĕн Октябрьски, улттăмĕшсем хушшинче Канаш хулин 6-мĕш, тăваттăмĕшсемпе пиллĕкмĕшсем хушшинче Муркаш шкулĕсем çĕнтерчĕç. «Формейшен» номинацире çиччĕмĕшсем хушшинче Сĕнтĕрвăрри районĕн Октябрьски тата Вăрнар районĕн Калинин, улттăмĕшсем хушшинче Канаш хулин 6-мĕш шкулĕсем чи маттуррисем пулчĕç. «Балри чи лайăх мăшăр» ята Канашри 6-мĕш шкулти Елизавета Петровăпа Александр Агафонов тивĕçрĕç.

Мĕнлерех вырăн йышăнни те пĕлтерĕшлех мар, уява хутшăннă кашни ача хăйне телейлĕ туйрĕ пулĕ тетĕп. Пирĕнтен чылайăшĕ çакăн пек балсене илемлĕ кинофильмсенче кăна курать, унта хăй те илĕртÿллĕ тум тăхăнса кĕвĕ çеммипе çаврăнса курас тесе мĕн тери ĕмĕтленет. Анчах кадет класне лекнисем кăна (вĕсем те пурте мар) çак ыра килсе хăйсене кăтартма пултараççĕ. Муркаш шкулĕн вĕрентекенĕ С.И. Рожкова çапларах шухăш каларĕ: «Паян та А.С. Пушкин тата Л.Н. Толстой вăхăтĕнчи пек балсем ирттерсен мĕн тери аван пулĕччĕ». Чăнах та, мĕншĕн бал ташшисене республикăри пур шкулта та вĕрентес мар? Ку вăл кашни ачана пĕчĕкренпех хăйĕн культура шайне аталантарма, илемлĕхе курма тата хаклама вĕрентĕ. Ун чухне, тен, çынсем те пĕр-пĕринпе кăмăллăрах пулĕç?



**_Лариса ПЕТРОВА._**

**Автор сăн ÿкерчĕкĕсенче:** Уяв саманчĕсем.

АСĂНУ

## «Афган вăрçи – манăн чĕре суранĕ»

Афганистан... Историе çырăнса юлнă ĕмĕрлĕх ят. Тăхăр çул пынă йĕркесĕр афган вăрçи миçе пин салтакăн, вĕсен амăшĕн асапĕ пулчĕ-ши? Совет çыннисен чĕринче нихăçан сывалмин тарăн суранĕ – Афганистан. Унăн ячĕ масар çинче лартнă палăксем çинче те ĕмĕрлĕхех хытса ларчĕ.

Вăрçă... Вăл çĕр çине асап, чĕре суранĕ, çухату, вилĕм кÿрет. Афган вăрçи те миçе çын пурнăçне татрĕ, вăй питти çамрăка амантса хăварчĕ. Афган çĕрĕ Раççее кунсерен цинк тупăкпа салтакăн ашшĕ-амăшне çĕр йĕтайми хуйхă ăсатнă. Вилнисем текех хăйсен савнă çыннисене ыталаймĕç, ачисемпе савăнаймĕç.

Афганистан çĕрĕ çинчи хирĕç тăрăва Йĕпреç районĕн 125 çамрăкĕ хутшăннă. Вĕсем пурнăçĕсене шеллемесĕр воин-интернационалист тивĕçне чыслăн пурнăçланă. Вăрçă хирĕнче ĕмĕрлĕхех куç хупнисен йышĕнче паттăр ентешĕмĕрсен ячĕсем те çырăнса юлнă: Александр Лебедев, Георгий Семенов, Борис Хиркин.

Пучинке ялĕнчи 9 çамрăкăн шăпи çак тискер вăрçăпа çыхăннă. Çар тивĕçне Афганистанра пурнăçланисенчен пĕри вăл – Валерий Иванов. Вăл çемьере – чи кĕçĕнни. 1987 çулта çара кайнăскер малтан Фергана хулинче десантниксен ятарлă полкĕнче «учебкăра» тăнă. Шăпа Валерий Иванова Афганистана илсе çитернĕ. Сăртлă-туллă çĕр-шывра ывăлĕ салтак тивĕçне пурнăçланине пĕлсен Ивановсен çемйинче канăç çухалать. Çырăвĕсенче яланах чиперех тесе çырнă пулин те, амăшĕн чĕри лăпкă пулман çав. Валерий ячĕпе ярса панă тав çырăвне халĕ те реликви пек упраççĕ Ивановсем. «Сирĕн ывăлăр: Иванов В.М рядовой, службăра тăнă хушăра хăйне ăста, дисциплинăллă, çирĕп салтак пулнине кăтартрĕ», – тенĕ унта. Ашшĕ-амăшне, Михаил Ивановичпа Нина Михайловнăна, ывăлне хĕçпăшаллă вăйсен мухтавлă йăли-йĕркине тивĕçлипех тытса пыма тĕрĕс воспитани парса çитĕнтернĕшĕн тав тунă. Валерий паттăр, хăюллă пулнине çарта панă тав хучĕсемпе дипломсем çирĕплетеççĕ. Афганистанра интернационалла тивĕçе пурнăçланăшăн ăна «Афган халăхĕнчен тав» тата «Çапăçура палăрнăшăн» медальсемпе наградăланă.

Паянхи кун Валерий Михайлович хăйĕн мăшăрĕпе Лилия Михайловнăпа çирĕп хуçалăх тытса пыраççĕ, виçĕ ывăл çитĕнтереççĕ. Ачисене ĕçе тÿрĕ кăмăлпа, яваплăхпа пурнăçлама хăнăхтараççĕ. Валерийшĕн яланах ыра тĕслĕх, шанчăклă юлташ пулнă амăшĕ вĕсене хуçалăхра пулăшса тăрать.

Нарăсăн 15-мĕшĕ – интернационалист салтаксене асăнса чысламалли кун. Çулсеренех Пучинкери пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкулта паттăр салтаксен ячĕпе пăшалран тĕл пересси пе ăмăрту иртет. Тĕл перекенсен йăлана кĕнĕ тупăшăвне Валерий Михайлович Иванов йĕркелет. Шкулта ытти мероприяти те çÿллĕ шайра иртет. Мускавран çулсерен килекен хăнасем (Канаш районĕнчи Янкăлч ялĕнче çуралса ÿснĕ авиаци генерал-лейтенанчĕ, Раççей Федерацийĕн Геройĕ Николай Гаврилов, Мускаври çарпа инженери академийĕн профессорĕ Иван Николаев, Андрей Герасимовпа Сергей Исаков подполковниксем) «Паттăрлăх урокĕсем» ирттереççĕ.

«Афган вăрçи – манăн чĕре суранĕ», – тет çак вăрçăра паттăрла çапăçнисене, пуç хунисене асăнса Валерий Иванов.

**_Наталья ПАВЛОВА._**

Йĕпреç районĕ, Пучинке.

Лев Медведев

# Сукмак

## калав

Кил картинчи вак-тĕвекпе аппалансан Уçка пӳрте кĕчĕ. Курăмсăр ĕçсем кулленех тупăнаççĕ. Хуçалăх ан юхăнтăр тесен ар çыннăн кунне пĕр пăта та пулин çапмалла текен каларăша Уçка пăркаланмасăр пурнăçлама тăрăшать. Пӳлĕмсем пушă. Арăмĕ лавккана çăкăр туянма кайса килме пулнăччĕ те çаплах çаврăнса çитеймерĕ. Шăплăх серепинчен хăтăлма радиоприемникăн уççине пăрчĕ. Ертӳçĕ эфира «Юрă вăчăри» кăларăм тухасса пĕлтерчĕ. Çамрăк çын пекех кăмăллать çак передачăна.

Сана савни тесе чĕнменччĕ
Нихçан та юнашар утман ...

Анлă пӳлĕм самантрах юрă кĕввипе тулчĕ.

«Сукмак» юрра пĕрре çеç мар илтнĕ. Малтанласа юрă унăн чунĕнче ерипен тĕлкĕшсе сӳнме пуçланă кăварăн лĕп çеç ăшшиллĕ тунсăх кăна çурататчĕ. Кăмăлĕ кĕрхи салху тапхăра çаврăнатчĕ. Меммеленме сăлтавĕ те çук тесе шутлатчĕ. Юратнă мăшăрĕпе те пĕр сукмакпа утсах мăшăрланчĕç. Ывăл-хĕрне, çуначĕсем сарăлса тĕрекленсен, вĕçсе саланма пулăшрĕç. Кашниех хăй йăвине çавăрса тĕпленнĕ. Халĕ акă иккĕшех юлчĕç. Юрă сăмахĕсен пуçламăш йĕркисемпе кĕвви ку чух вара Уçкана пусăхланăн, чĕри типĕ ăвă вут чул хĕлхемĕнчен хыпса илнĕн, сасартăк шухăша ячĕç.

Юрă вăратма пултаракан туйăмсем пирки мăшăрĕпе сăмах та пуçарман. Ăçта унта! Вăл мăшăрĕн шанăçĕнче иккĕленӳлĕх туйăмĕ вăратасран çăвар уçма тăхтанă. Виçсе-шухăшласа тапратмалли ыйту вĕт-ха!

Халăхра хĕрĕн хĕрĕх, каччăн аллă текен каларăш ахальтен мар çуралнă пуль. Çамрăклăха каялла таврăнсассăн унти юрату аварĕ ахăртнех тĕрлĕ тĕл пулăва упраса хăварнă-хăварнах. Килĕшӳре пурăнакан çемьере те тепĕр чух унсăрăнах кашăк-тирĕк шăкăртатмалли тупăнать те, мĕншĕн асăрханулла пулмалла мар?

Анчах тĕлĕкре пĕр вĕçĕм...
юхать эфирта юрăçăн сасси. Сăвăç унăн шухăшне пĕле-тăрах çырнăн туйăнать. Сăлтавне Уçка пĕр хăй çеç тĕрĕс ăнланать. Айăпли пĕтĕмпех хăнана кĕтсе илекен ватлăх кĕреки иккен. Çулланнă этемĕн тăнлавĕсене шап-шурă пас тыта пуçласан, иртнĕ вăхăт унран ирĕк ыйтмасăрах, ăна чееленсе те пулин вăрттăн ахах пек хаклă ачалăхне таврăнтарать. Шăпах çав тапхăр çаврăнса çитсе ларчĕ пулас ун пурнăçĕн сакки çине.

Сукмаксем... Вĕсем, те тĕрлĕрен пулнăран, кун-çул уттине хăйсен ансат пĕлтерĕшĕпе пур пĕр тĕлĕнмелле сăнлаççĕ. Юрату, шкул сукмакĕсем... Уçкашăн кашниех хаклă. Вĕсем тăрăх каллĕ-маллĕ утнă, тепĕр чух чупнă та. Тертленнĕ, пиçнĕ, ӳснĕ, ар пĕвне кĕнĕ... Çурма тăлăх ачалăхĕнче такăрлатнă шкул сукмакĕ чи черченни те ачашши, инçет çути пек астарса пурнаканĕ.

...Епле манăн-ха шкул сукмакĕсене? Вĕсем тăп-тăрă шыв çулĕ, çăл куç таппинчен вăй илнĕ евĕр, çуралнă кил уратинчен пуçланнă. Ăна хурçă карап евĕр кăра тинĕс хумĕсем витĕр пурнăç çулĕ çине илсе тухнă. Çавна пулах шкул сукмакне, ытарлă савнă тус-юлташĕ евĕр, асăнче тĕпе хурса упратчĕ. Халĕ акă хăйĕн киммипе ас илтерме ярăнса тухса çуталчĕ.

Çурла уйăхĕччĕ. Колхозра хĕрӳ ĕç çи – вырма пыратчĕ.

– Ывăлăм, кĕçех çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланмалла. Пĕлӳ пухма малалла Ухваркăна утмалла пулать, – терĕ те ăна амăшĕ, çав кунах çичĕ çул пĕрле вĕреннĕ, Микулайсем патне илсе кайрĕ. Юлташĕн ашшĕпе амăшĕ те килĕнчех. Урамалли стена çумĕнчи сак çинче палламан çын ларать.

– Шкул директорĕн ячĕпе санăн саккăрмĕш класа вĕренме илме ыйтса хут çырмалла,– терĕ те хайхи типшĕм ар çын, Уçкана пама тетрадь листипе ручка тытнă сылтăм аллине ун енелле тăсрĕ. Çавăн чухне унăн шĕвĕр тата вăта пӳрнисен пуçĕсем чĕлĕм тĕтĕмĕпе саралса ларнине асăрхарĕ.




– Туртать, – вĕлтлетрĕ шухăш пуçĕнче.

Вĕсен шкулĕнче пĕр вĕрентекен пурччĕ. Унăн та сылтăм аллин икĕ пӳрнен пуçĕсен ӳчĕсем çутă хăмăр тĕслĕ сăран пек курăнатчĕç. Вĕрентекенĕн сĕтел умĕнчи малти партăра ларакан Уçка пĕр вĕренӳ çулĕнче урок тăршшĕпех вăл сывласа кăларакан килте лартса тунă махорка тĕтĕмĕн шăршипе «киленсе» пурăнчĕ. Ача ниепле те çав сысна çимен апатăн шăршине хăнăхаймарĕ.

– Апла ку Ухваркă салинчи вăтам шкул вĕрентекенĕ, – тӳрех пĕтĕмлетӳ турĕ. Тĕлĕнмелле пĕр пеклĕх. Юрать-ха унăн телейне тенĕн вĕренӳ çулĕ пуçлансан урокĕсене урăх классенче ирттеретчĕ.

Камсемпе пĕрле вун виçĕ çухрăма утма шăпа тухĕ? Çитерĕ-ши чăтăмлăх çав çула утса тухма? Ыйту çине ыйту çуралса ачана вĕçĕм канăçсăрлантарчĕç. Вăл, Микулайран çулталăк кĕçĕнскер, хăйĕнчен аслă ачасемпе пĕрле çичĕ класс пĕтерчĕ вĕт. Ялта ун пек кун пек йывăрлăха туйман. Питĕ лайăх астăвать, пĕрремĕш класа çӳреме пуçласан ăна асламăшĕ çăпата сырма вĕрентнине. Çав ĕçе те чиперех вĕренсе хăнăхнăччĕ.

Çапла иккĕленӳллĕ шухăшсемпе авăн уйăхĕн пĕрремĕш кунĕ çитнине те сисеймерĕ.

– Уçка, тăмалла, – тутлă ыйхă тĕлĕшĕпе асламăшĕн сассине илтнине паянхи пек ас тăвать.

Мĕншĕн пит ирех вăратать-ха ăна асламăшĕ? Ниепле те тавçăрса илеймест.

– Тăмалла. Шкула каймалли вăхăт çитрĕ, – çаплах лăпкăн силлет асламăшĕ.

Ухваркăна утмалла вĕт-ха! – тинех вăранчĕ пуçĕнче те шухăш. Ăшă тӳшек ытамĕнчен хăтăлма йывăр. Чун çепĕçлĕхне çĕнтерсе тăма тиврĕ. Вăл тăнă çĕре асламăшĕ кăмака умĕнчи вучахра хуранпа яшка пĕçерсе сĕтел çине антарса та лартнă. Умывальникри шывпа пит-куçне йĕпетсен ыйхă уçăлнă пек пулчĕ. Тăнă-тăманах çиес те килмест. Çапах та яшкана икĕ-виçĕ кашăк сыпса пăхрĕ. Тăраниччен çывăрса çитерейменни чăрмантарать. Сумкăна чĕлĕ çăкăрпа сахăр катăкĕ чиксе инçе çула тухса утма хатĕр пулчĕ.

Тул çутăла пуçланă çеç-ха. Ирхи уçă сывлăш çан-çурăма çӳçентереть. Урам тăрăх тăвалла утса хăпаракан Уçкана хирĕç Микулай та хăйсен хапхинчен тухрĕ. Тăкăрлăкра вĕсене аслă классенче вĕренекен Сойка, Лиди, Ванюш кĕтсе тăраççĕ иккен.

Тăкăрлăкри сукмак çынсен анкартийĕсем хыçĕпе колхоз йĕтемĕсем патне тăсăлать. Пĕр анкартинчен вуннăмĕш класра вĕренекен, каччă пулнă Петĕр тухрĕ. Вара пурте хура хăю евĕр авкаланса выртакан вырнă ыраш хăмăлĕсем хушшинчи сукмакпа măн улăха анчĕç. Кунта вăл икĕ шыв çулĕ тĕл пулса пĕрлешнĕ вырăнта чăнкă тăвайккипе каллех уй урлă тăвалла улăхса кăнтăралла сулăнать. Çав уйра, вĕсене тухăçра çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ вырăнтан хĕрелсе тухакан кĕр хĕвелĕ, хăйĕн сӳрĕк ăшшипе тӳпенелле кармашса, утма хавхалантарчĕ..

– Çул вăрăм пулас-ха, – шутлать хăй ăшĕнче Уçка.

Каллех çырма. Ун урлă хывнă кĕпер çырма тĕпне анса хăпарас хуйхăран хăтарчĕ. Сукмак Вылçи ялĕ çумĕнчи çил арманĕпе юнашар чупса иртсе тӳпеме тухатрĕ. Кунтан вара Ухварка ал тупанĕ çинчи пекех курăнать. Чунра тинех унта çитес шанăç çуралса малалла утма хистерĕ. Çавăнти пĕлӳ шкулĕ йыхăрать тесе каласшăн мар Уçка. Пурĕ пĕр инçеçке!

Малта татах та çырма! Каллех унта анса хăпармалла. Миçемĕш хут? Тăвайккийĕсем мелсĕр чăнкă та вăрăм. Ăна Петĕр тăвалла утса хăпарнă чух хăйсенчен хăварасшăн мар тек-текех:

– Аллусене хытăрах сулласа утма тăрăш, – тесе сĕнетчĕ.

Пĕр эрне утнă хыççăн Микулай Ухваркăна çӳреме пăрахрĕ. Мĕн пулчĕ? Вăл çул вăтам шкулта малалла вĕренессине тӳлевсĕр тунăччĕ. Чăн та, уроксем пуçланиччен физзарядка ирттересси çирĕп йăлара пулнă.

– Инçетрен утса килсе ывăнтăм, – тесе ача каланине хăлхана чикместчĕç.

Класра ларса юлнă ачана тупсан-тусан директор çумĕ тӳрех:

– Выкăвăр! – тетчĕ те, шеремет вĕренекенĕ пĕр сăмахсăр шкул картишне зарядкăна тухатчĕ.

Тен, çав кун йĕрки килĕшмерĕ-ши ăна? Виçĕ район чиккинче ларакан вăтам шкулăн тĕп йывăç çуртĕнчи коридор стенисем çав ялсенчи çамрăксен шавĕпе тулатчĕç. Класра хĕрĕх ачана çитрĕ.

Çапла, пиллĕкĕн, куллен пĕр яла кĕмесĕр утса, такăрлатрĕç сукмака. Вăрăма тăсăлнă ăшă. Ăна якатма ăшă та вăрăм кĕре пула эрешменсем карса тултарнă шап-шурă пиçĕ çипсем те чăрмантараймарĕç. Пĕррехинче кăнтăра вĕçекен хур кайăксем çунаттисене сула-сула салху сассисемпе вĕсене çывхарса пыракан хура кĕре çирĕпленсе кĕтсе илме хушса хăварчĕç. Йĕпе-сапаллă вăхăтра киле çӳремерĕç. Интернатра пурăнчĕç. Хĕл ларсан сивĕ мучи сукмака мамăк евĕр ăшă çиттипе витсе хуратчĕ те шкул çулне вăрăмлататчĕ. Ялсем витĕр тавра çаврăнмаллаччĕ. Пит-куçа тăм илесси те хăратмастчĕ. Хăратнă та пулĕ, анчах та:

– Парăнмалла мар, – çав чĕнӳ шанăç панă.

Сукмак çуркунне каллех чĕрĕлетчĕ. Симĕслене пуçланă тавралăх илемĕпе астаратчĕ. Ир уя тухатчĕç çеç, юрăç тăри тӳпере хăйĕн кĕввипе кĕтсе илетчĕ. Каялла киле таврăннă вăхăта уй-хир çураки тăвакан тракторсен шавĕпе тулнăран сар хĕвел ăшшинчи сиплĕ сывлăшпа киленсе утма пĕртте кичем марччĕ. Те вăрăм çула хăнăхса çитрĕç. Хырăм выççине манса кайсах, çав симфони евĕр уй шавне ăша хывса, малашлăха талпăннă.

Сойка, Лиди, Петĕр, Ванюш ӳссе пиçсе çитнине ĕнентерекен аттестат илчĕç те тăххăрмĕш класа Ухваркăна çӳреме пĕчченех тăрса юлчĕ. Амăшĕ, чун тĕпренчĕкĕн лару-тăрăвне витĕр ăнланса, велосипед туянса пачĕ. Парне хыççăн Уçка çав сукмак патне урăх таврăнаймарĕ.

Тăвата çул иртрĕ. Вăтам шкула вун иккĕн çеç пĕтерчĕç. Вĕсене патшалăх вун пĕр çул вĕренмелле те туса панăччĕ. Анчах та çав эксперимент темшĕн пурнăçа кĕреймерĕ.

Ас илӳн хумĕсем çийĕпе хăю пек сукмак куç умĕнчен пĕр çухалмасăр çаплах вĕлкĕшет.

## Вĕрентĕм

Авлантăм та хунькасси иккĕмĕш кил пулчĕ. Мăшăрпа ĕç хыççăн канмалли кун умĕн уйсемпе тарăн çырмасене хыçа хăварса çавăнта çитеттĕмĕр. Хуняçа эпир çитсенех:

– Ывăннă урасем хытасран кĕрĕве чей ярса паран пуль, – тетчĕ ăш пиллĕн.

– Сана та кирлĕ марччĕ-ши тата? – тавçăруллăн сăмах тĕксе илетчĕ хуняма ăна. Е шӳтлесе:

– Хырăма каймарĕ-им? – тесе кулатчĕ хăш чухне тата.

Чиркӳ прихутне кĕнĕ ял мĕн ĕлĕкренех Михаил архангел кунне уявланă. Паллах, кĕр мăнтăрĕпе. Эпир, çамрăк мăшăрсем, çав уява пĕрремĕш хут хутшăнсаччĕ.

– Этемĕн ĕç тени çеç мар, канăвĕ те савăнăç пултăр. Ĕçсе пуça çухатар марччĕ, тăвансем. Эрехе пичкене тултарнă евĕр ĕçме сĕнместчĕ те çавăнтах юрă пуçлатчĕ:

Шурă тутрине
Çыхма пĕлес пулать ...

Хунямара ĕçченлĕхпе ташă-юрă ăсталăхĕ çăл куç пек тапса тăратчĕç. Паллă алă ăстиччĕ. Ун патне çăм атă йăвалаттарма таврари ялсенчен çӳретчĕç.

– Юрла, кĕрӳ!

– Ай, намăс! Тăван халăхăн авалхи хăна юррине те пĕлместĕп иккен. Кĕрекере ларакан çыннăн, авланнă вăл е хусах, кил хуçин çăкăр-тăварне чыс тумалла! Çав юрра чăн та чи пирвайхи хут илтрĕм. Кĕвви тĕлĕнмелле мăнаçлă та ансат. Сăмахĕсем шухăша ярса чуна тыткăнларĕç. Пуçра ирĕклĕн те çăмăллăн хывăнса пычĕç. Халăх юррине çĕкленӳллĕ туйăмпа чиперех вĕренсе çитрĕм.

Айтăр, ташлар, – терĕç тепĕртакран.

Купăсăн çав телейлĕ саманта кĕтсе тунсăхланă чĕлĕхĕсем пӳлĕмре чуна витермелле çавраçил кăларчĕç. Тинех пуçланчĕ хĕрӳ вăхăт!

Юрланипе ташлани
Çынна усал туни мар.

– Кĕрӳ, ташламалла! – чĕнеççĕ тăхлачăсем.

Мĕн пулать те мĕн килет. Каччă чух вăйă картине тухма именнĕ-çке! Ку чух мĕншĕн тата хама тархаслаттарас. Упа та ташлама вĕреннине нивушлĕ пултараймăп?! Хăюлăх çитерсе эпĕ ташă картине тăтăм.

Иккĕн-виççĕн пухăнса
Çынна çисе ларни мар.
Шăранчĕç такмаксем купăс çеммипе.

Кĕвĕ майĕпе пулса пынă ташлаканăн хусканăвĕсем çирĕп ыйтакан мăшăрăн кăмăлне те тивĕçнĕ. Репертуара «Пурçăн тутрине» юрă вара яланлăха кĕрсе юлчĕ.

# Хаваслă 2014 самант

## Пуç ватмăш

Кашни ретри е юпари икшер фишкăна туртса хумалла. Анчах та юлнисем çÿлте е айккинче кăтартнă цифрăсемпе танлашмалла.




## Сăмах каçмăшсем



**Сылтăмалла:** 7. Пуш хир кушакĕ. 10. Пушă. 13. Рим хулине пуçарса яраканĕ. 14. Вăл карма çăвара кирлĕ. 15. Унта католиксен «ашшĕ» пурăнать. 16. К.Марксăн пуянлăхĕ. 17. Çыравçă – Артур ... Дойл. 18. Унта хоккейла выляççĕ. 19. Сиенлĕ хурт-кăпшанкă. 21. Пуç ... 22. Чăхсен «султанĕ». 24. Хут тĕрки. 27. Кăркăс халăхĕн эпосĕ. 31. Кĕскетнĕ винтовка. 34. «Лолита» роман авторĕ. 37. Шаман параппанĕ. 38. Литература жанрĕ. 39. Шурă кирпĕч. 40. «Рубин» командăри футболист. 41. Хитре юрлакан кайăк. 42. Вăл хуртан хăраман. 43. Телей туртса кăлармалли выляв. 44. Раççейĕн пĕрлештернĕ командин футболисчĕ.

**Аялалла:** 1. Венесуэла тĕп хули. 2. Урай сармалли материал. 3. Пушар сÿнтерекенсен вышки. 4. Хваттере янă хурт-кăпшанкă. 5. Çар званийĕ. 6. Кĕвĕ инструменчĕ. 8. Статор юлташĕ. 9. Пулă тытмалли хатĕр. 11. Хуралтă. 12. Çăмха çиппи (вырăсла). 20. Кăнтăрти курăк. 21. Тинĕсри чĕр чун. 23. Калаçнă чухнехи сăмах хăпартмăшĕ. 25. Пирĕн йĕлтĕрçĕ, халь Канада çĕр-шывĕшĕн ăмăртать. 26. Вĕренÿ пÿлĕмĕ. 27. Ун çине ислам тĕнне ĕненекенсене тухса чĕнеççĕ. 28. Раççей академикĕ, водород бомбине шутласа кăларнăскер. 29. Авалхи шутсăр ăслă патша. 30. Сăмах пĕлтерĕшне усăмлатакан. 32. Тутлă «кукăль». 33. Кĕвĕ терминĕ. 35. АПШ президенчĕ – ... Обама. 36. Курорт утравĕ.

## Вырăнне веçех пĕлсен те, Вырнаçтар эс хăваланăн.

*Выльăхсем те, кайăксем те,*
*Витене кĕме-мĕн маннă...*
*Вырăнне веçех пĕлсен те,*
*Вырнаçтар эс хăваланăн.*




*Уçлăха вĕçес тесессĕн,*
*Çук, пулмасть –*
*вĕренмесессĕн...*




1. Шкул ачин «арчи». 2. Спорт тумтирĕ. 3. Ун çинче вĕрентекен ларать. 4. Унпа туслă пулмасан, сывлăхпа ялан аптран. 5. Тÿпери çăмламас «сурăхсем». 6. Ăмăрту пуçламăшĕ. 7. Тÿпе вăл – вĕçсĕр-хĕрсĕр... 8. Çеçпĕл çавăн пек чĕреллĕ пулнă теççĕ.

Енчен те тĕрĕс хуравласан, палăртнă йĕркере чăваш космонавчĕн хушаматне тупма пултаратăр.

## Илĕртет-çке çÿллĕ ту, Эппин çирĕп утăм ту!

*Ăнлантарни: Малтан, клеткăсене кирлĕ сас палтупмалла. Вара пĕчĕккĕн çÿ çакна каламалла, пушă кусса пыраççĕ. Вĕсем вара тараççĕ.*




*аялтан пуçласан аванрах, пушă лисене лартса сăмах шыраса лелле хăпарса пымалла. Тата клеткăри сас паллисем çÿлелле сăмахне кура улшăнма та пул-*




## Пур сăмахăн вĕçĕ – рак – Вĕсене çаклатнă рак!




1. Красноармейски районĕнчи станци. 2. Çурхи вĕçен кайăк. 3. Хăрăк турат «çирĕплĕхĕ». 4. Египет президенчĕ пулнăскер. 5. Çĕрпÿ районĕнчи ял. 6. Унпа çырла е кăмпа пуçтараççĕ. 7. Иранпа юнашар çĕр-шыв.

*Николай* ***КРАСНОВ*** *(Йĕпреç районĕ)* ***хатĕрленĕ.***